зала 20
шкафъ
полка
№ 265

Казанскаго Общества Пчеловодства.

№ 17.

А. Хабачевъ.

Чтенія по пчеловодству.

Выпускъ I.

Переводъ С. Сергѣева.

Велле хурҫӗ йӗркин усси ҫинҫен.
Вӗлле хурҫӗсен пурӑнӑҫӗ ҫинҫен.
Килӗшӳллӗ вӗлле суйласси ҫинҫен.

Съ 8 рис. въ текстѣ.



Цѣна 15 коп.

КАЗАНЬ.
Центральная Типографія.
1910.

Чув.
3-2300/1

Изданіе Казанскаго Общества Пчеловодства.

№ 17.

А. Хабачевъ.

Чтенія по пчеловодству.

Выпускъ I.

Переводъ С. Сергѣева.

Вĕлле хурҫĕ йĕркин усси ҫинҫен.
Вĕлле хурҫĕсен пурăнăҫĕ ҫинҫен.
Килĕшӳллĕ вĕлле суйласси ҫинҫен.

Съ 8 рис. въ текстѣ.

Публ. Б-ка Пенинграде

КАЗАНЬ.
Центральная Типографія.
1910.

Вĕлле хурҫĕ йĕркин усси çинҫен.

Хура халăхăн мĕн пур тĕрлĕ ĕçĕсенҫен (отрасли сел.-хоз.) хурт усрама тытăнасси пек çăмăллине урăх епĕ пĕлместĕп. Хурт усрама тытăнас пулсан, ытти ĕçе тытăннă пек малтан темĕн ҫухлĕ тăккаланса пĕтес çук. Акă калăпăр: çĕр ĕçлесе, выльăх тытса, йе пахҫа уссипе пурăнас тесен, малтан пуçланă ҫух темĕн ҫухлĕ укçа пĕтерес пулаҫ те, усси пулассине миçе çул кĕтес пулаҫ! Вĕлле хурҫĕсем малтанхи çулах усă кăтартаççĕ. Хурт усрама тытăнас тесен мĕн кирлĕ-ши? Пĕр ик-виç вĕлле илме çирĕм—вăтăр генкĕ кирлĕ те, тата малтанах кирлĕ йăпаласем валли—питлĕх—«сĕтка», тĕтĕрмелли—«курилка», карассем илме ик-виç генкĕ кирлĕ. Мĕн пурĕ çавă. Вĕсене лартмалăх пĕр татăк çĕр кил таврашĕнҫе кирек камăн та тупăнаҫ. Улăминҫен вĕллесем илме укçа кирлĕ пулаҫ те, пахҫи аслăланарахпа йăпаласене хушмалла пулаҫ: пыл йухтаракан машина, пыл пиҫетне касмалли çĕçĕ, пыл савăҫĕсем, мĕнсем илмеçеç укçа тухаҫ.

Хурта ытти ĕç хушинҫе те пăхса усрама пулаҫ. Çирĕм вĕлле пулсан та, çу каçа хуртсем таврашĕнҫе тавлăкра пĕрер сехеҫ ĕçлени çитеҫ. Епĕ кун сиктермесĕр пĕрер сехеҫ ĕçлес теместĕн, хăш ҫухне епĕ пĕрех кунта пилĕк сехет те ĕçлетĕп, тепĕр ҫух ернипе те пĕр ĕç пулмасҫ. Мĕн пур ĕçленĕ сехетне кунĕ çине уйăрсан тавлăкра пĕр сехетрен ытла пулмасҫ. Кунне пĕрер сехеҫ хурсан вăл çулахи пилĕк уйăхра 150 сехеҫ пулаҫ; 150 сехетлĕх ĕçе кунле 10-шар сехет ĕçлесен 15 куна кăна çитеҫ. Ку питĕ кирлĕ. Çавăнпа хурт тытма кирак кам та пултараҫ: крестьянинăн та, çулла тырăпа утă шухăш пулин те, алă çитеҫ. вĕрентекен—«учител» те хурт тытма пултараҫ, вăл çула пушă, священник та, чиновник те, пур те. Хурт йĕркипе [1]) пурнакан çынăн хурҫĕсем хĕлҫ каçнă

[1]) Хурт йĕрки тесе епĕ „Пчеловодство“ тессине калатăп.

вăхăтра çур çул ытла хурт таврашĕнҫе ĕç çук. Ку хурт йĕркине ытти ĕçе тăвайман çынсем те, ваттисем, уксах-ҫăлахсем те пултараççĕ, вăл та пиҫ ырă. Хурт йĕрки çинҫен çыракан çырусем çинҫе суккăр, урасăр, ҫăлах çынсем хурт пăхса усранине кăтартса калаççĕ. 1904 çулта № 4 „Пчеловодство“ йатлă журнал [1]) çине акă мĕн çырнăҫĕ: Пĕр сакăр çул пулĕ, Вятка хулари хурт пахҫине ытти çынсемпе пĕрлешсе пĕр урасăр Тимофей йатлă ватă салтак пынă. Хăрах урине вак вăрçăра Плевка патĕнҫех хварнă. Тимоеейа укçа тухкаланă та, анҫах вăл, уксахскер, çер ĕçне ытти çынсем пек ĕçлеймесĕр аран—аран çăкăрпа квас çикелесе, ĕлĕкхи икĕ уралла ҫухнехи ырă вăхăта асăнса, питĕ наҫар пурăннă. Такĕш, пĕри Тимоеейе малтан хурт йĕркине вĕренсе хурт тытса усрама ăс панă. Хурт йĕркине вĕренсе киле тавăрăнсан хурт илме укçа сукки пĕтĕм ĕçе ҫарса тăнă. Çут çанталăкра мĕнле рекал пулмаст! Çак Тимофейăн йывăç урине çыхтарма сайра хутра Питĕре военный госпитале каймалла пулнă. Пĕринҫен çапла кайса вырăн (койка) синҫе выртнă ҫухне госпитале Великій княз пынă та, Тимоеей унăн куçĕ тĕлнех пулнă. Беликій княз Тимоеейран ăçта, мĕнле ĕçре урасăр пулнине тĕпҫекелесе хаҫхи пурнăçĕ çинҫен те ыйтнă. Тимоеей хурт йĕркине вĕренине, анҫах хурт туйанма укçа çуккине пĕлсен великій княз ăна хаваслантарнă:“ тĕнҫе ырă çынсăрах мар, сана „шăна“ туйанма мĕнле те пулса пулăшĕç,“ тенĕ. Тимоеей килне тавăрăнсан, вăл таврăнасса хăйсен уҫздн. хуларан текех ыйтнине пĕлнĕте, питех тĕлĕннĕ. Тимоеей хулана пырсан-сана хурт туйанма великій княз укçа йанă, теççĕ. Çавăнтанпа Тимоеей хурт йĕркеллĕ усракан пулса пуйан çын пулнă. Тимоеей хăйте, унăн йышĕте ҫăн малтан хурт тытма ăс парса ҫухăнран тухма пулăшнă çынна халĕ те тав тăваççĕ тени сасси пур.

Ватă çынсемшĕн, ҫирлĕ çынсемшĕн, пуринҫен ытла ҫахăтканă йерме пуçланă çынсемшĕн тулти пăсăлман сывлăшри ĕç темрен те лайăхрах сывлăх парса вăй кӳртеҫ. Ҫĕре сикнĕ (нервноразстроенные) çынсемшĕн, ҫуна лăплантармалла ĕç шыракансемшĕн хурт пахҫи темле больницаран та иртереҫ. Çавăнпа хурт

---

[1]) „Журнал“ тесе ернере, икĕ ернере, йе уйăхра кĕнеке майлă тухакан хаçата калаççĕ.

йĕркипе пурнăкансем хушшинҫе питĕ ватăлиҫен (нумай çул) пурнăкансем хурт тытман çинсенҫен ытларах пулĕ тесĕ шухăшлатăп. „Хурт йĕрки“—„пчеловодство“, „хурт пахҫи“ тесессĕнех куç умне акă мĕн киле тăраҫ: вăрман уçланни, йĕ сĕм вăрман пек улма—йывăçи пахҫи, йывçисем хушшинҫе пĕр çирĕм вĕлле, варинҫе хушă, хушă умĕнҫе шур çӳçлĕ, шур сухаллĕ „асате“ мăшăртатса лараҫ, хуртсем валли тем ĕçлет пек туйăнаҫ. Кĕнеке çыракан ăста çынсем (писатели-художники) çаплах çыраççĕ. Театра кайса стаховт çырнă „Ночное“ курас пулсан савăнса тĕлĕнсе кайăр: унта Михенă йатлă ватă çын хурт муҫçи, ăна ырĕ кăмăлĕшĕн пурте йуратаҫĕ, ун çинҫен аҫасем те

„Крĕпок дĕдушка Михеевич старик,
Одинешенек на Пасĕкĕ живет“.....

тессе йурлаççĕ.

Хурт пылĕ пире пурăнмалĕх усă туниҫтен пуçне пĕтĕм киҫ йышне хавас—савăнăç кӳреҫ. Стел çине пыл кӳртсе лартсан пĕтĕм киҫ йышĕ хĕпĕртеҫ, стел хушшине пĕр пĕрин çулпе çыпăçса лараççĕ те, ывăнните таçта кĕрсе кайаҫ, пĕри пĕрне çилентернине те. кӳрентернине те мантараҫ. Пысăк уйав, йе питĕ ырă хăна килнĕпе пĕрех.

„Сенатран“ тухнă питĕ кирлĕ хут (разъясненіе) пур, унăн тăрăх хулари, йалти çынсене хăйсен, пахҫине хурт вĕлли лартма никам та ҫараймасҫ. Вăл хут пĕр „городская дума“ хурт усрани вут-квартан хăрушă тесе ĕлĕкленипе тухнĕ. Закон хурт усракан майлă, вăл уссăллă ĕç хутне кĕрсе ăна пулăшаҫ.

Хăшĕ пĕри вĕрентекенсенĕн (учителсен) хура халăх ĕçне ĕçлеме, хурт йĕркипе хăтланма вăхăт çук, унăн хĕллехи йывăр ĕçĕ хыçĕнҫен канса тепĕр çул валли вăй пухас пулаҫ теççĕ. Апла çеç те мар; пĕр земствора (Череповецкое, Новгор. губер.) Н. Т. Исаин тăрăшнипе школри хурт пахҫисем (школьныя пасĕки) питĕх ĕрҫенĕҫĕ. Вара çак хурт пахҫисем кирлĕ мар, ан пулҫĕр, тесе сасси тухрĕ, „учителе хурт кăшлаҫ“ тесе кăшкăрма пуçларĕç. Акă ĕнтĕ, мĕн пулҫĕ ку! Ҫăн-ши ку вĕрентекенсенĕн хуртпа хăтланма вăхăт çук тени, ун пирки хăйĕн вĕрентес ĕçне сийен тăваҫ, тени? Ăçтан тухса кайрĕ ку йăпала? Ҫăнах та хурт усрама, хуртпа хăтланма ирĕксĕр хĕсĕрлесе хушсан усси пулас çук. Пĕр вăхăтра школ пуçлăхĕсем, вĕрентекенсем вĕренекен аҫасене пахҫасем çинҫен те, хуртсем çинҫен те кăтартҫăр тесе, школа-

сем патне улма-йывăçи пахăисем, хурт пахăисем тума ирĕксĕр хушма тытăнăĕç. Кăна хирĕç епĕ хам та пуринăен малтан тăратăн, мĕншĕн тесен аăасене вĕрентмеллине сахаллатма мар, вĕрентмелли ахаă те пиĕ сахал. Хурт йĕркине пысăн çынсене вĕрентес тесен, вăл йурăăĕ, вăсене çула пуçтарса ĕçленине кăтартас, сăмахпа та, хут тăрăхта вĕрентес, уна вырăсла „курсы“, „бесĕды“ теççĕ. Вăл кирлĕăĕ. Вара хайхи школа пуçлăхĕсем канаш туса пăхсан, вĕрентекенсене ирĕксĕр урăх ĕç хушса тутарма ăарăнăĕç. Хăш пĕр вĕрентекенсем çын хушнипе мар, хăйсен ирĕкĕпе, хăйсем йуратнине, ĕçлес килнипе хурт хыççĕн кайаççĕ. Çавăн пек вĕрентекенсем нумай. Вăсемшĕн ку ĕç йывăр та мар, хĕн те, мар, ăăн çăмăл, ырă ĕç, вĕренес, пурне те пĕлес килтерекен йапала. Çавă-ши аăасене вĕреннсене ăарни? Ним тумасăр аллуна хурса ларни, йе кирлĕ мар ĕçе туни хуртпа хăтланынăен ырăрах пулĕ-ши вара?

Ырă сывă çынна вырăнта выртса вăй кĕрсе пухăнмасăр, вăйпа ĕçленĕ хушăран пуçпа та ĕçлесен, каннă хушăра ăуна йăпатсан вăй кĕреĕ. Хурт йĕркипе, пахăасем йĕркипе ĕçлесе пурнакан учителсем темĕн ăухлĕ тупма пулаĕ, хăйсем пур те аăасене вĕрентнĕ тăрăх ăăн ырă шутра тăраççĕ.

Хура хăлăхăн тĕрлĕ ĕçĕсенăен хурт йĕрки пек сахал ĕçлесе, сахал укçа пĕтерсе нумай усă кăтартаканни тата пулмĕ. Ăăнласах акă мĕнле: пĕр вĕллерен уссине пĕр пăт пылпа пĕр ăĕрĕк йыш (тăватă йышран пĕррĕ уйăрлсан ăĕрĕк йыш пулаĕ) шутласан, 20 вĕлерен 20 пăт пыл пулаĕ, 8 шар тенкĕрен 160 тенкĕ, тата 5 йышĕ 8 шар тенкĕрен 40 тенкĕ, пурĕ 200 тенкĕ пулаĕ. Хурт йĕрки йапалисене, вĕллисене, 100 тенкĕ хурса кивĕлнĕшĕн (тӳрлетме мĕн тума) 10% кăларсан та 140 тенкĕ усси пулаĕ. Уссине питĕ сахал хурса пылне вĕлле пусне çуршар пăт çеç шутласан та, 100 тенкĕ ытла пулаĕ, 100 вĕллерен 600 тенкĕ, 10 вĕлерен 60 тенкĕ, крестьяниншăн вăл пысăк пулăшу. Ăипер пĕлсе пăхсан пĕр вĕлле пĕр çулта виçĕ пăт, пилĕк пăт пыл пани сайра-и тата. Çавăн пек çулсĕнăе усси паçăр каланинăен ик-виç хут ытларах пулаĕ. Журналсем вулакан çынсем астăваççĕ пулĕ—учител Власов пĕр çура пĕр вĕллерен $10^1/_2$ пăт пыл илнĕ тесе çырнинăен мĕн ăухлĕ тĕлĕнсе калаçрĕç. Пур те ырă пулсан ун ăухлĕ илме пулаĕ. Манăн хурт пахăи питĕ ырă, пыл паракан вырăнта марăĕ пулиă те, епĕ пĕр вĕллерен виçшер пăт ытла илеттĕм. Епĕ хам курса сăнанипе калатĕп: ăилайраппа хурт усракан çынсем, пĕр

вун вĕллене йахăн пулсан, хуртсăр çавăн пекех ĕçлесе пурнакан çынсенҫен пуйантарах та, треклĕрех пулаççĕ. Кирак мĕнле хурт йĕрки çинҫен çыракан журналсене, „земская газетасене“ уçса пăхсанта, крестьянсем хуртран нумай усă илиине куратăн. „Вĕстник Русск. О-ва Пчеловодства“ йатлă журнал çинҫе $189^{5}/_{6}$ çулта Н. Т. Исаин хурт пахҫисем çинҫен çапла çырнăҫĕ: Пĕр вĕллерен $10^{1}/_{2}$ пăт пыл илекен Власов хурт усрама 1891 çулта виçĕ вĕллерен çеç пусласа кайнă; пилĕк çултан унăн 33 вĕлле пулнă; 1895 çулта 75 пăт пулнă; çав çулхине хурт пахҫинҫен унăн мĕн пур усси 857 тенкĕ пулнă. Çав Власов хăйне хурт йĕркине вĕренниннĕ çын патне. Хăй ĕçĕсем çинҫен çырни çĕнҫе акă мĕн каланă: „есир мана хурт усрама хушса ăс панă минута тав тăватăп, епĕ ĕнтĕ хальхи аҫасене пысăк школасенҫе вĕрентме пултаратăп, епĕ ватăлсан, хуртсем манăн „пенсія“ вырне пулĕçĕ“ тенĕ. Тепĕр хăш лайăх пĕлекен çын А. Тарасов хурт тытма 1892 çулта 2 веллепе пуçларĕ те, тăватă çултан, 1895 çул иртнĕ çĕре, 96 выллене çитерҫĕ; çав çул мĕн пур усси 576 тенкĕ пулнă. Епĕ çавăн пекисене темĕн ҫуллĕ кăтарташшăн, анҫах хуртăн уссине ҫухлама калани те çитĕ.

Вĕлле хурҫĕн мĕн пур усси ку çеç мар халĕ. „Хурт пулмасан пахҫа та пулмасть,“ теççĕ, малтан. Вĕлле хурҫĕ пĕр ҫеҫек çинҫен тепĕр ҫеҫек çине вĕçсе çӳренĕ ҫух ҫеҫекĕн çăнăхĕ пекине хăй çăмĕ çумне çыпăçтарса пĕр ҫеҫек çинҫен теприн çине илсе кайать. Çапла ҫеҫекĕн аçламине пусат те, тĕшĕ пулать [1]). Хăш пĕр йывăççен хăйсен ҫеҫекинҫи çăнăхĕпе çимçи (тĕши) пулмаст, çăнăхĕ тепĕр йывăçăн ҫеҫеки çинҫен пырса лексен тин çимçи пулать. Тата хăш пĕр ӳсекен йапаласенĕн пĕр йеши ҫеҫекисем аçисем (тышикисем пур, плодник çук), тепĕр йеши ҫеҫекисем амисем (плодник пур, тыҫинки çук) пулаççĕ: хăйарсем, кавăнсем, вĕсен

[1]) Пур ӳсекен йапалан ҫеҫекинҫен те аçи амине пусмасан тĕшĕ пулмаст. Ҫеҫекĕн ҫăн варинҫе „плодник“ пур, вăл ами; унăн тăрринҫе-вĕçĕнҫе „рыльце“ пур. Плодник йĕри тавра „тыҫинкисем“ пур, вăсем аçисем; вăсен вĕçĕнҫи муклашкинҫе тусан пеки пур „пыльца“, вăсем аçин вăрлăхĕсем Пыльца рыльце çине ӳксе плодник ăшне кĕрсе каймасан—аçи амине пусмасан нийепле тĕшĕ те пулмасть.

пуш ҫеҫекисем аҫисем. Вăсен тусанĕ пĕр ҫеҫек ҫинҫен теприн сине пырса ӳкмесĕр, аҫа ҫеҫек ҫинҫен ама ҫеҫек сине ӳкмесĕр, ҫимҫи пулмасҭ. Ҫапла ĕнтĕ ҫав ҫеҫек ҫăнăхне илсе ҫӳреме вĕлле хурҫĕ питех кирлĕ. Вăсемсĕр пуҫне ҫеҫекĕҥ ҫăнăхне ҫиҙ, йе ытти хурт-кăпшанкăсем ҫеҫ илсе ҫӳрĕҫҫĕҫ, анҫах кăсем шанҫăклă мар. Епĕ ҫеҫене ларнă улма-йывăҫи туратне вĕлле хурҫĕсем ан пыҫĕр тесе шурă „тюляран“ мих пек туса кăшăлпа тăхăнтарса лартрăм. Ҫеҫекисем сине хуртсем пыраймарĕҫ, улмисем ҫăнах та пулмарĕҫ. Ҫавăн пек нумайĕшĕ туса пăхнă та, хуртсăр пуҫне ҫимĕҫ пулмасҭ. Тăхлан пуҫăн (клевер) вăрри хурт пулмасан виҫҫĕмĕш пайĕнҫен пĕр пайĕ те пулайманине «англиҫанссм“ пуринҫен малтан астунă пулмалла.

Пуринҫен пысăк усси акă мĕн: хуртсем ҫеҫексене пуснăран сынна усă тунă ҭухне, ҫеҫекисене пĕр сийен тумасăр, вăсемсĕр пуҫне пĕр уссăр, ахалех пĕтмелле йапалана пухаҫҫĕ. Ҫапла хуртсем пĕрер тăмламăн пухнипе пĕр пăт мар, пиҥ пăт, милліон пăт пыл пухăнат. Пĕр хамăр Россиярах кашни ҫул 50 милліон тенкĕлĕх пылпа ăвăс пухăнаҭ. Унтан пуҫне тата кашни ҫул йут патшалăхсенҫен пирĕн патшалăха темҫе милліон тенкĕлĕх ăвăс илсе килеҫҫĕ.

Пыла хăй тĕллĕн ҫеҫ ҫимеҫҫĕ, унтан ĕҫмĕлли йапаласем тăваҫҫĕ, пряниксем, печнисем, тата ытти йапаласем те. Ку йапаласем пыл хакне ӳсгереҫҫĕ. Авалхи ҫынсен „ватă пыллă сăра“ ерех вырне пулнă. Крестьянсем халĕ те пыллă сăра тума ăста, такама та урарах ӳкереҭ.

Ăвăс пуринҫен ытла ҫурта тунă ҫĕре кайаҭ хурта ахаҙ каламаҫҫĕ. „Турă шăни“, „Турă кайĕкĕ,“ „Турра йурăхлă“, тесе. Ăвăс ытти йапаласем тунă ҫĕре те кайаҭ, тата йапала кĕлиткисем, мĕнсем тăваҫҫĕ.

Кунта хушăн усси ҫинҫен, ырă йенҫен ҫеҫ ҫырнă, тепĕр йенҫен—килĕшменни ҫинҫен пĕр сăмах та ҫук, тейĕҫ. Хăш ҭухне сийенĕ те, килĕшменни те пулаҭ, пахҙи пахҙипе те пĕтсе лараҭ, тейĕҫ. Епĕ калăп: ҙăн вăл та пулаҭ, анҫах вăл хурҫĕсене тумката вĕллере усракансен, хурт пурнăҫне, вăсене усрама, пăхма пĕлменисен, кам хурт йĕркине вĕренмесĕр, ним пĕлмесĕр, сисмен ҫĕртен хурт хуҫи пулнисен. Вĕреннĕ ҫыннăн сийенĕ пулсан та, пысăк сийенех пулмасҭ, вăл та хăйĕн айĕпĕпе мар, йе сивĕ ҫула пулсан, йе ҙир-ҙăр йерсен сийен пулаҭ.

Хурт туйанма уксине ăçтан тупмалла? тейĕç тата теприсем. Епĕ паçăрах каланăҫĕ: мĕн пур укçи те 25 тенкĕ кăна кирлĕ. 25 тенкине те ăçтан тупмалла? тейĕç. Уна земствăран, йе Управленіе Земледѣлія и Государственных Имуществăран малалла кивçен пек илме пулаҫ. Новгородск. губер. Н. Т. Исаин тăрăшнипе акă çапла тăваççĕ: хурт туйанас тейекен çынсене хысна пахҫинҫен (казенная пасѣка) икă вĕлле параççĕ; вара унăн уссине паракнине илекенни çурмалла тăваççĕ. Пĕр икĕ-виçĕ çултан илекенни хысна вĕллисене калле таврăҫ те, хăй хурт туйанса йулаҫ. Хысна хурҫĕсем пĕтсен, сийен пулсан, уншĕн илекене айăп пулмасҫ, анҫах вăл кăшт та пулин хурт йĕркине пĕлмелле, уссăр хурт памаççĕ. Вятск. губ., Уржумскій уѣздри завѣдующій Окуневской фермой та вăллесене çапла салатаҫ. Ку ĕçе тепĕр тĕрлĕ те тытăнма пулаҫ: темиçеҥ пĕрлешсе (йулташланса) пĕрле ĕçлемелле, уна вырăсла «товарищество на паях», теççĕ. Çавăн пек йулташланни Вятск. губернинҫе нумай. Анҫах пирĕн кирек хăçан та иккĕн йулташлансан пĕри теприне хĕстереҫ.

Калăпăр: санăн хурт усрама хавасу та пур, туйанма укçу та пур, анҫăх ку сахал—малтан хурт йĕркине вĕренес пулаҫ. Хурт усрама ăçта вĕренмелле ши, мĕнле вĕренни ырăрах-ши: кĕнеке вуласа, йе ху ĕçлесе, ĕçленине ху куçупа курса? Епĕ пĕр çына пĕлетĕп, вăл хурт йĕркине ниçта та ĕçлесе, курса вĕренмен темçе икĕнеке тĕплĕрех вуласа тухнă та, хурт туйаннă. Унăн ĕçĕ малтанхи çулах ăнса кайнă. Анҫах ку хăй те пуп, вăл кирак мĕнле кĕпенене те вуласанах ăнланаҫ. Крестьянин апла мар, вăл вулама пĕлсен те аран—аран вулакалаҫ. Çавăнпа унăн куçпа курса, ĕçлесе. йе пĕлекен çын сăмахине илтсе вĕренес пулаҫ. Сирĕн уѣздри „сельско-хозяйственная школа“ йе „ферма“ пулсан, çавăнта кайăр, сире ахалех хурт йĕркине вĕрентĕç. Çавăнпек вăрентекен çĕре кайма Земская Управаран ыйтма пулаҫ, ху укçу па та кайма пулаҫ, йе пĕрер уйăха хурт йăрнине пĕлекен улпут, учител, пуп, йе ахаҫ крестьянин патне те тарça кайма пулаҫ. Хавасу пулсан вĕренме пулĕ.

„Министерство Земледѣліяпа“ „земствасем“ ку ырă ĕç хутне кĕрсе питех пулăшаççĕ. Министерство акă мĕнле пулăшаҫ: малалла кивçен пек укçа параҫ, хурт йĕркине вĕрентекен школасем, курсы, выставки, съѣзды тăваҫ; пĕҫҫен пĕр çынсене, хурт тытакан ушкăнсене (общества) укçан, кĕнекесем, хурт йăркин йапалисем парса пулăшаҫ, тата çӳресе вăрентекен «инструктор» тейекен

çынсем тытаҫ, çĕрĕк ҫир-гнилец мĕнле, ăçтан пулнине, уна хирĕç мĕнле тăмаллине пĕлме укçа параҫ, 1903 çулта хуртсене çитерме 15000 пăт сахар йӳн хакпа пана, хысна вăрманĕнҫе йывăç хăвăлĕсенҫе хурт тытма та, хурт пахҫисем лартма та ҫармаҫ, сельско-хозяйственная школасенҫе хурт çинҫен тĕрĕс вĕрентнине астăваҫ.

Земствасем хурт йĕркине малалла йарасшĕн, халăх хушшине сарасшĕн (вăрентесшĕн) Министерстворан та ытларăх тăрăшаççĕ. Хăш-пĕр земствасем, Костромское Губернское Земство та, хурт пахҫисем тума, пахҫисене ырăрах тума (лайăххлантарма) халăха «процентсăр» (ӳстермесĕр) укса салатаҫ, пĕр çынна 50 теннĕ, йулташлă пулнисене—ушкăна 300 тенкĕ таранҫен, укçине 5 çулта тӳлесе татмалла. Çапла тума «Губернское Земское Собраніе» „экономическія мĕропріятія“ укçинҫен Управа аллине пур уĕзда та 100 тенкĕ салатма мĕн пурĕ 12000 тенкă панă. Ытти земствасем те çапла тăвăç тесе шанма пулаҫ. Хурт йĕркине малалла йама мĕн те пулин туман земства пĕрре те çук пулмалла. Нумай земствссем йалтан йала çӳресе вĕрентекен çынсем тытаççĕ—„разъĕздные пчеловоды“, пĕрне, аслине „губернскій пчеловод“ теççĕ. Кĕçĕнисем—„уĕздные разъĕздные пчеловоды“ текенисем халăха вĕрентмелли хурт пахҫисем тытса тăраççĕ—«образцовыя пасĕки», хурт таврашĕнҫе кирлĕ йапаласем сутаççĕ—«пчеловодныя принадлежности“, йалти хурт усракансем йыхăрсан, вĕсем патне кайса пĕрле ĕçĕсене тăваççĕ: хурҫĕсене тунката вĕллесенҫен рамкăллă вĕллесене куçараççĕ, хурҫĕсене апат çитереççĕ, ҫирлисене сыватаçĕ уйăртараççĕ, сийенлĕ йышĕсене тӳрлетеççĕ, ăс параççĕ, вĕрентеççĕ, кирак мĕн те тăваççĕ. Губернскій пчеловод çак ĕçсене те тăваҫ, тата земства укçине вĕренес тейекен çынсене вĕрентеҫ—«курсы». Çапла Вятскій губернскій пчеловод С. К. Красноперов кашни çул ултшар уйăх (март уйăхĕнҫен сентябр уйăхне çитиҫен) пуçтарса вĕрентеҫ. Костромской губернскій пчеловод Г. А. Кузьмин çу каçа вĕрентнĕ хушăран тата пĕрер уйăх вĕрентеҫ—„мĕсячныя курсы“. Губернскій пчеловодсем халăха вуласа та, калаçса та вĕрентеççĕ—„чтеніе“, „бесĕды“, хăшĕ пĕри „журналсем“ кăлараççĕ (çыраççĕ), çавăн пек журнал „Пчеловодство“, „Обозреніе Пчеловодства“ пур. „Инструкторсен“ ĕçĕ губернскій пчеловод ĕçĕ майлах. Гата нумай земская управасен халăха хурт йĕрки йапалисем сутма „складсем“ пур, вăсене ĕçлемелли „мастерскаясем“ пур. Нумайĕшĕ управасем канаш тума çулталăкра

темиçе хут „совѣт“, „коммисія“ пухаççĕ. Совѣта хурт йĕрки çинҫен канаш тума, ăс ыйтма „земскій гласныйсемпе пĕрле ахаҫ хурт тытакан çынсене те ҫĕнеççĕ. Канаш туса килĕшнисене хăшне-пĕрне земское собранисене йараççĕ. Земствасем йалсенҫе хурт йапалисене пĕрлешсе ĕçленисене ăнтарма тăрăшаççĕ—„кустарное производство“; хурт çинҫен вĕрентекен сел.-хозяйственная школасене, сел.-хоз. обществасене, ахаҫ сынсене те укçапа пулăшаççĕ.

Хурт çинҫен вĕренсе, пулăшса Министерствопа Земствасем çеç усă тумаççĕ, „Общества Пчеловодства,“ „сел.-хоз. общества,“ тата ахаҫ çынсем те пысăк усă тăваççĕ. Çапла Питĕрте „Русское Общество Пчеловодства“ пур, вăл хăй „Вĕстник Русск. Об-ва Пч-ва“ йатлă журнал кăлараҫ, çынсене пуҫтарса вĕрентеҫ—„курсы,“ вĕсен йапаласем сутмалли „склад“ та пур. „Императорское Россійское Общество акклиматизаціи животных и растеній“ пур, унăн та „Пчеловодный Отдĕл“ пур, Мускавра «Образцовая Измайловская пасĕка» пур, „музей,“ „курсы“, унта асли пăхса тăраканни Ѳ. С. Мочалкин. Тата „Императорское Вольно-Экономическое Общество“ пур, унта 1886 çултанпа „пчеловодный листок“ йатлă журнал тухаҫ, кăлакаранни проф. И. М. Кулагин. Перьмская губ. Кунгурское Об-во Пчеловодство пур, вăл та хăй журнал кăлараҫ. Кіевра „Южно-русское Об-во Пчеловодство“ пур, унăн журналĕ „Ежегодниг Пчеловодства“. „Екатеринославское Об-во Пчеловодства“ „Пчела“ йатлă журнал кăлараҫ, „Череповецкое О-во Пчеловдства“—„Записки„ клараҫ. Пирĕн Хусанти „Казанское Общество Пчеловодства“ йал хушисенҫе халăха вĕрентеҫ—„курсы“, хурт йĕрки йапалисене йалтан йала кăтартса çӳреҫ—„выставки передвижного музея“, йе канашсем тăваҫ, пылпа, хурт йĕрки йапалисемпе, кĕнекисемпе сутă илӳ тăваҫ, „журнал кăлараҫ. Кăсенҫен пуçне тата ахаҫ çынсем нумай журнал клараççĕ: В. М. Изерин „Вĕстник Иностранной Литературы Пчеловодства“ клараҫ; Г. В. Парадіевъ „Пчеловодный Музей“ кăлараҫ. М. А. Дернов „Пчеловодная жизн“ клараҫ. Пĕр çулхине И. Е. Шаврова пиҫ ырă „Сĕверное Пчеловодство“ йатлă журнал кăларҫĕ. Хурт йĕрки çинҫен земскій хаçатсемпе журналсем çинҫе те çыраççĕ, тата ыти сел.-хоз. журналсем çинҫе те çыраççĕ: „Земледĕлец,“ „Крестьянское хозяйство“, Деревня,“ „Сельскій хозяин,“ „Земледѣльческая Газета“, тата ыттисем çинҫе те.

Хут çине çырса та, ахаҫ ĕçлесе те хурт йĕркине хăпартса, малалла йарса, халăх хушшине сарса акă çак çынсем питех пысăк усă турĕç: професор А. М. Бутлеров, вăл хаҫ вилнĕ, Г. П. Кондратьев, П. Н. Анучин, В. И. Ломанни, И. Е. Шавров, Н. Т. Исаин, Л. А. Потѣхин, А. Ф. Зубарев, Андріяшев, И. В. Любарскій, С. К. Красноперов, М. А. Дернов, В. М. Изергин, тата питĕ нумайĕшĕсем.

Вĕлле хурҫĕсен пурăнăçĕ синҫен.

I.

Хурт усракан крестьянсем хушшинҫе хурт пурăнăçĕ çинҫен нимĕскер пĕлмеççĕ, ытла питĕ пăҫ тĕттĕм. Халĕ те нумайĕшĕ, хурт уйăрлас умĕн хурт амĕш çĕмĕрт çинҫе урăх амĕш шыраҫ те, тупсанах хурт йышĕ уйăрăлаҫ, тесе шухăшлаççĕ. Кашни çул манпатма хурт усракансем пыра-пыра, хуйхă пуҫҫĕ, пулăш-ха, тесе тилмĕреççĕ, пуринҫен ытла ватă çынсем темçе çухрăмран пыраççĕ. Мĕнле хуйхине ыйтсанах хурт пурнăçĕнҫе ҫăн кирлине те пĕрним пĕлменинҫеи тĕлĕнсех кайатăн. Пĕри: «хуртсем ĕçлеме наҫар çӳреççĕ», тесе тилмĕреҫ, хăй мĕн пирки, мĕншĕнне пĕлмесҫ. Вăл вĕлле хуппине (алăкне) уçса ăшăнҫе мĕнлине пăхман, пăхсан пăсасран хăранă, çавăнпăнех ним пĕлмесҫ. Тĕпҫеме тытăнсан хурҫĕсем хăçан ĕçлеме ҫарăнине калĕ,—нумайранпа „наҫар ĕçлеми пулҫĕç“, нумайранпа мар-и. урăх нимĕскер те пĕлмесҫ. Шухăшлăр-ха, мĕнле пулшăн, мĕн тума пĕлĕн?! Тепри калаҫ: сассине наҫар кăлараççĕ», теҫ. Унтан тепри—«амĕшĕ çухалҫĕ, хурт амĕш çук-ши?» тесе ыйтаҫ. Хăй хурт амĕшĕшĕн пĕр тенкĕ, икĕ тенкĕ те парасшĕн. Çакă çула пур хурт хуçи те мĕн ҫухлĕ кирлĕ, çавăн ҫухлĕ амĕш клартарма пултарнă вăхăтра çапла тилмĕрсе çӳреççĕ. Хăй, хурт амĕш шыраканни, çук пулĕ тесе çеç шухăшлаҫ, çавă пит тарăхтараҫ. «Вĕллере тин сапнă çӳре пулĕ?» тесе ыйтсан, ăна пĕлмесҫ. «Сан вĕллере ами нумайраннах çук-и тен, ун вырне трутовка (çӳре сапакан ĕç-хуҫĕ, йе хĕсĕр амĕш) пулман-ши, вара хуртусам амĕшне парсан та вĕлереççĕ?» Çук, пĕлмесҫ, Анҫах «вĕлереççĕ» тенине илтсен сасартăк тĕлĕнсе кайса тĕлĕнсе тĕпҫеме тытăнаҫ, пурне те пĕлесшĕн. Вара пирĕн йумах нумай пулаҫ, тахăçана çитеҫ. Хайхи манăн хăна йапалана тĕплĕ пурне те пултарма пулнине ĕненсе, манăн сăмахсем ҫăннине, тӳрре килнине ĕненсе, хăвăртрах килне васкаҫ, кайран кайма тăрсан тата

мĕнле, мĕн тумалине темиçе хут ыйтаť. Хайхи çын тин аташми пулаť. Килне кайсан вĕллен çӳлти хуппине уçса пăхма, йăвине салатма, кирек мĕн тума та хăрамасť. Куншĕн халĕ унăн пĕр аллă çухрăм каймалла пулнă, ĕлĕк «мĕн пулса мĕн килеť» тесе ĕçленине прахмалла пулнă, аташса хăранине çĕнсе вĕреннĕ çын сăмахине иглемелле, аслашĕ сен йăлине, вăсем пек ĕçлелине прах малла пулнă. Пур çын та ун пек пултарас çук. Нумайĕшĕ вĕллинҫе пĕр-пĕр сийен пулсан хăраса çынран пытараççĕ, никама систермесĕр вĕллисем пĕр хурт йулмиҫен пĕтсе лараççĕ, вара нийепле те пулăшма вăхăт иртеť. Йе пĕр-пĕр «хуртусене пĕтерĕп» тенĕ сын пулсан, унăн çиллине çавăрашĕн йăпăлтатма тытăнаť. Çак сăмахсене ĕнентересшĕн сире акă мĕн каласа кăтартăп: пĕриҫен ман патма тин хурт усрама тытăннă çамрăкрах çын пыҫĕ те, „хуртусене пĕтерĕп тейекен çын ҫăнах пĕтерме пултараť ши? Пĕтерме пултараť пулсан çавăнтан хăтăлма май пĕлместĕп-ши?» тесе ыйтаť. Тепри тата мана хурҫĕсене пырса пăхма ҫĕннĕ ҫух (унăн гнилец пулнă) хăйĕн çурҫă паллисене, мĕнле тупмаллине шалт каларĕ те, епĕ пырасса çул çинҫе сыхланă. Кайран ăнласа илтĕм: вăл епĕ çынсенҫен ыйткаласан кӳршисем кам патне, мĕнлескер, мĕншĕн пынине пĕлесрен хăранă мĕн. Хурт йĕркине пĕлмесĕр пит аташнине, авалхи йăласемпе хăтланине курсан хурланас килеť. Хуртсем пурнăçĕ çинҫен, хурт усрасси, пăхасси çинҫен çырнă ăнланмалла, ырă, йӳҥ кĕнене кирлĕ, вăл кĕнеке таçти тĕттĕм йала та çиťĕ, вара хурт хуçисене ăс ыйтма вăхăт иртерсе, укçа та пĕтерсе темиçе çухрăма çуремелле пулмĕ, вăллери сийене те çынран пытармалла пулмĕ «усал куçран» та, «усал çынран» та, «тухатмăшсенҫен» те, ытти йапаласенҫен те хăрамалла цулмĕ.

Вĕлле хурҫĕсем мĕн пур хăйсен пурнăçĕпе, хăйсен тирпелине хастарлă—ĕçлĕхлĕ пулма, таса пурăнма, пĕр-пĕриншĕн тăма, малаллине астума, типерлĕ пулма çул кăтартаççĕ, ăс параççĕ. Ахаҫ каламаççĕ: „вĕлле хурҫĕ пек хастарлă“ тесе Хурт ăвăсĕ (çурта) таса ҫĕрене пĕлтереť. Турăм умне çурта лартни—ăвăс пек таса, ырă ҫĕрепе Сан куçăнтан пăхатĕп, Сана тилмĕретĕн, Сана тавтăватăп тени пек пулаť. „Философ“, «поэт» тейекен ăслă çынсем пирĕн йĕркĕсĕр пурнăçа хуртсен ҫăн ырă [пурнăçне хирĕç тесе шутлаççĕ.

Çула кашни çийенсĕр хурт йышĕн, кашни уйăрăлса тухнă çуран, пур хуртлă вĕлере те хурт амĕш пулаť, теминçе пин ĕç-

лекен хуртсем—ĕç-хурҫĕсем, çĕре йахăн сăрăсем пулаççĕ, Вĕллере хурт амĕш пĕрре кăна. Вăл асли пулса нимĕскер те хушса, кăтартса çӳремеҫҫ, пĕр май çăмарта тăваҫ—çӳре (çăвăр) сапаҫ,



Рис. 1.

Матка, рабочая пчела и трутень.

унăн ĕçĕ çавă. Вăл хăй ĕмĕрне çапла çеç иртереҫ, унăн ĕмĕрĕ виççĕ. тăваттă, пилĕк çул. Хурт амĕшĕ хăй ĕмĕрĕнҫе пĕррĕ сăрăпа сыхланма (аçипе пустарма) çуралсан пиллĕкĕмĕш, çиҫĕмĕш, йе саккăрăмĕш куньнҫе вĕҫерен тухса вĕçеҫ. Сăрăпа вăл вĕллере сыхланмаçҫ. Уйăрлакан хуртсемпе тухниҫен пуçне вăл вĕллерен урăх нихаçан, ниçта та тухмаҫ ăна апат хуртсем çитереççĕ, тула вĕллерех тухаҫ (вулаҫ).

Ĕç—хурҫĕсем, ĕçлекен хуртсем, мĕн пур ĕçе тăваççĕ: апат пуçтараççĕ, çӳрисене трантаççĕ, вĕллиҫи çӳп-çапа тасатаççĕ, йышĕсене тăшманĕсенҫен сыхласа хирĕç тăраççĕ, карас тăваççĕ, йăва хатĕрлеççĕ ĕç-хурҫĕсем амĕшне пăхăнса пурăнмаççĕ, ĕçĕсене те аслисем, наҫалникисем хушнипе ĕçлемеççĕ, хăйсемех мĕн кирлине пĕлсе хăвăртрах тăвасшĕн ĕçлеççĕ, вĕсем çуралассах çавăн пек ăспа çуралаççĕ. Пур ĕçе те вĕсем хăшĕ йывăр, хăшĕ çăмăл, хăшĕ хăрушă, хăшĕ хăрушă мар тесе шухăшламаççĕ, ĕçлесе пултăр. Çапла ĕнтĕ ĕç-хурҫĕ пĕҫҫен хăйшĕн мар, пĕтĕм йышне ырă, усă тăвасшĕн хăçан та хăçан çунатисем çуркаланса—таткаланса пĕтиҫен, йе хăйне пĕр-пĕр кайăк—кĕшĕк çăтса йариҫен, йе тăшманĕсене хирĕç тăрса хăйне ҫиксе—вĕсерсе хвариҫен

çĕрĕн кунĕн ĕçлесе иртереҫ. Çав тĕрлĕ ĕçлекенскер хăйне те, хăйĕн ушкăнне те хĕрхенме пĕлмесĕр, хăйне те никам хĕрхенмесĕр çапла сасартăк, йе хĕҧ курса вилсе выртаҫ.

Сăрă çамрăк амĕшне пусма кирлĕ—çыхланма, унăн мĕн пур ĕçĕ те çав çеç, вăл урăх нимшĕн те кирлĕ мар. Пĕр çамрăк амĕшне пĕр сăрă çеç пусаҫ, хăй çавăнтах, ĕмĕрĕнҧи çавăншĕн çуралнă пĕр ĕçне тусан, вилеҫ. Ытти сăрăсене-ним тумасăр çисе пурнаканскерсене, ĕç-хурҧĕсем апатсĕр тарăхтараççĕ, карасĕсем синҧен хваласçĕ, пыл вăхăҧĕ иртсе сивĕсем пула пуçласан вĕллисенҧен хăваласа кăлараççĕ. Пур вĕллере те кашни çулах çамрăк амĕш пулмасҫ, мĕншĕн пур вĕллере те çавăн ҧухлĕ нумай сăрă пулаҫ? тесе ыйтăр есир. Вăл акă мĕншĕн: амĕшĕн пустарас вăхăт çитсен тухса вĕçнĕ çĕрте сăрăпа тĕл пуласси шанăçлă пултăр тесе

Хурт амĕшĕн, ĕç-хурҧĕсен, сăрăсен ĕçĕсемпе пурнăçĕсене лайăхрах сăнаса пăхăнăр

Пуринҧен малтан карасĕсене мĕнле тунипе сăнăпăр. Караса хуртсен ăвăсран тăваççĕ. Ăвăса вăсем ăçтан та пулин тултан—мĕнтен тупса килмеççĕ, вăл вĕсен ӳтĕнҧе, шалта çу пек, йе тар пек пулаҫ. Унтан хырăмĕ айне сыпăнĕсем хушшипе çӳхе (нухрат пек) шап-шурă икшерĕн туха-туха лараҫ. Çула хурт хырăмне тăсса пăхайăр, икĕ сыпăк хушшисенҧе, сийелтисен ăйĕнҧе кăсийери пек, икшер шап-шурă нухрат татки пекисем выртаççĕ, çавсем ăвăс таткисем. Выҧăх ырă апатпа ҧĕрĕлсе çу хывнă пек, хуртсен, те пыл вăхăтĕнҧе (пыл пуçтармалли ытларах пулсан) ăвăс ытларах пулаҫ. Хуртсен урăх вăхăтра карас тумалла пулсан, вăсем хатĕрленĕ пыла ытларах сийеççĕ. Карас тума хуртсем çӳлтен пуçласçĕ, хăш ҧухне айалтан пуçласа та çӳлелле кăшт тăсасçĕ. Карас тунă ҧух вăсем пĕр-пĕрин урисенҧен çакланаççĕ те, сăнҧăр пек пулса пĕкĕ майлă çакăнса лараççĕ, пĕккин икĕ вĕçĕ çӳлелле. Çапла нумайăн пуçтарăнса вăсем хăйсем таврари сывлăша ăшăтаççĕ, ăшă çĕрте ăвăсĕ çемçелеҫ. Çапла ларса тата вăсене пĕр—пĕрине ăвăсне тыттарма аван: айалта сакăнса тăраканисем çӳлерехисене тыттараççĕ, лешсем пĕри теприне парса ҧăн çӳлте карас ĕçлененисене тыттараççĕ. Кăсем ăвăсне илсе тутисемпе çемçетеççĕ те, малти уриçемпе вырнаçтара—вырнаçтара çыпăстараççĕ. Малтан хуртсем маҧа çумне пĕҧик, йака татăк туса лартаççĕ. Татăки кăшт пысăклансан ун çине йунашар—йунашар лакăмсем туса лартасçĕ. Тепĕр ĕреҫ (йĕрке) лакăмсем туса

тухнă ҫух кунăн лакăмисем çӳлти еретĕн лакăмĕсем хушши тĕлĕнҫе пулса пыраççĕ. Виҫĕ лакăм хушши тĕлĕнҫе (кĕтесинҫе), карасăн тепĕр йенҫе пĕр лакăм пулса пыраť. Вара ку лакăмсене тӳрлетеççĕ те, вĕсем çаврака пулса лармаççĕ. виҫĕ кĕтеслĕ пулаççĕ. Капини лакăм тĕлне икĕ йенелле те ултшар кĕтеслĕ кĕпçесем —карас куçĕсем туса лартаççĕ. Карасĕсене айăлалла питех тӳрĕ антараççĕ (рис. 2-й). Карас куçĕсем кăштах çӳлелле пăхса лараççĕ. Вăсен вăрăмĕш $^{5}/_{16}$ вершка ($^{1}/_{2}$ дюйм) пулаť, пĕтĕм карас куçĕсене, вырăн пулсан, кăшт тăсма та пултараççĕ. Икĕ карас хушшинҫи вырăна хăйсене çӳреме $^{1}/_{4}$ вершка хвараççĕ. Ку хушша вершкан пĕр $^{1}/_{2}$ осмушка ыттларах, йе ансăртарах тусан айăп пулас çук. Пылла карассем таçкарах пулҫĕр тесе епĕ хăш ҫухне вĕлле хĕрĕнҫи рамкисене сайрарах çакатăп.

Карас пĕр йешши вĕтĕ куçлă пулаť, вăл ĕç-хурҫĕсене кларалли, апатне усрамалли, унта пылпа ҫеҫек çăнăхне хураççĕ. Тепĕр йеши шултра куçлă пулаť, вăл сăрăсем клармалли, тата пыл хумалли, унта ҫеҫек çăнăхĕ пулмасť. Тата тепĕр тĕрлĕ карас куçĕсем пулаççĕ—амĕш хуранĕсем, вĕсем хурт амĕшĕсене клармаллисем (рис. 3). Амĕш хуранĕсене карас айне, хĕррисене пӳрнеске



Рис. 2. Хуртсем хăйсем ĕçленĕ карас.



Рис. 3 амăш хуранĕсем: а) пиҫетлеменни, б) пиҫетлени, в) айкинҫен хыпланн, г) амĕшĕ тухнă.

майлă туса лартаççĕ. Вĕсен шăтăкĕсем айăлала (çакăнса) лараççĕ. Ĕç-хурҫĕ карасĕсенҫех сăрă карасĕ туса кайнă вырăнта карас ку-

çĕсем тĕрĕс пулмаççĕ, унта вара хуртсене клармаççĕ, пыл çеç хураççĕ. Караса çӳре кларма ырă, треклĕ, сахал йапалапа сахал вырăн йышăнмалла урăх майлă нийепле те тума çул. Карас куçĕсене урăх майлă темĕнле тӳсассăн та, кун ӗухлĕ ырă, треклĕ пулас çук, ăвăсĕ те ытларах кирлĕ пулмалла.

Пыл тултарнă карас куçне пылĕ сахăрланасран, йе сывлăшри шыва (пăса) туртса йӳсесрен, хуртсем ăвăспа питреççĕ. Ӳссе çитнĕ çӳреллĕ (шурă хурта карас куçĕсене çара ăвăспа питĕрмеççĕ, сывлăш кĕме ăвăспа çилĕм пекине, ӗеӗек çăнăхне хутăштарса питреççĕ. Çĕнĕ йăвара ăвăс шап-шурă пулаҫ. Вара çӳре кларнă çемĕн варланса хуралаҫ, анӗах вăл улшăнмасҫ, çавăнпа уна тасатса шуратма пулаҫ.

Хурт пахӗинӗе çукаçа вĕллесем патĕнӗе ир пуçласа каçӗен хуртсем çӳренипе вăсен кĕрленĕ сасси çеç илтĕнсе тăраҫ. Пĕр—пĕр вĕллерен хурӗĕсем мĕн ӗухлĕ ытларах тухса çӳреççĕ, çавăн ӗухлĕ хуçине савăнтараççĕ. Вĕлле умĕнӗе тăрса ĕçрен çĕклемпе килекен хуртсем вĕлли умне çăмăр пек тăкăнине сăнаса камăн ӗунĕ савăнмĕ! Килекен хурӗĕсене суса кларма хват çитес çук! Ытти хурӗĕсем вĕллинӗен васкаса тухаççĕ, шăтăкĕнӗен тухнă тухманах вĕçсе çӳлелле пĕррĕ, иккĕ çаврăнаççĕ те, куçа курăнми пулаççĕ. Акă хайхисем пĕтĕм хире, улăхсене, вăрмансене, пахӗасене килĕнӗен нĕр виçĕ çухрăм хушши саланса пĕтрĕç. Хыпаланса пĕр ӗеӗек çинӗен теприн çине лара-лара пылпа çăнăхĕсене пуçтараççĕ. Ӗеӗек ăшне пуçне ӗикеççĕ те, тутлă сĕткенне ӗĕлхипе ĕмсе хырăмăнӗи пыл пĕсехине хываççĕ. Çапла пĕсехине тултариӗен ӗеӗек çинӗен ӗеӗек çине хыпаланса çӳреҫ те, çăварĕнӗен карас куçне пушатма хăвăртрах килелле веçеҫ. Тĕрлĕ ӗеӗекрен пылĕ те тĕрлĕ сăнлă тĕрлĕ тутăллă пулаҫ. Хура-тул пылне (хура-тул ӗеӗекисенӗен пуçтарнине), çăка пылне, йе ытти пылсене пурте пĕлĕççĕ пулĕ. Вĕллене халĕ тин илсе пынă пыл шĕвĕ, шывак пулаҫ. Шывĕ сывалса пылĕ çăралсан вара хурӗĕсем уна пиӗетлесе лартаççĕ. Хуртсем тупсан ытти тутлă йăпалмсене те тиркесех каймаççĕ: хăш ӗухне халь каснă тункатаçем çинӗе, йе йывăç çулӗисем çинӗе тутлă шывсем пулаççĕ, çавсене те илеççĕ. Çакă (çунă пыл) пыла хуртсене хăль каçма ытларах хăварсан ӗĕкрене йерсе ӗирлетме пултараҫ.

Пылран пуçне хуртсене хăйсемшĕн те, çурисене трантма та тепĕр тĕрлĕ апат кирлĕ, уна вырăсла „бĕлковая пища“ теççĕ. Ку апата вăсем ӗеӗексенӗенех илеççĕ, вăл ӗеӗек çăнăхĕ. Вăл ӗе-

ҫекĕн варинҫе майра йĕки пуҫĕ пекинҫе ҫăнăк пек, йе тусан пек пулаҫ. Ҫав ҫăнăх пеккине пур те курнă пулмалла: хурăн кăҫăкине (ҫеҫекине), ăвăс кăҫăкине, йе шăркана ларнă ыраш пуҫне алăпа сĕрсен сарă тусан пеки сыпăҫаҫ-ҫăн ҫавă. Вĕлле хурҫĕ ҫеҫек ҫăнăхне тутисемпе урисемпе пуха—пуха сурҫĕкĕпе йĕпетсе муклашпа пек тăваҫ те, кайри пĕççисен лакăмĕсем сине—карҫинкисене тултараҫ. Ку карҫинкасем амĕшĕн те, сăрăсен те çук. Ҫапла темиҫе ҫеҫек çинҫен ҫăнăхне пуҫтарса карҫинкасене тултарсан вĕллине таврăнаҫ. Ҫăкăхне вĕллере çӳрисене сывхарахри карас куҫĕсене пушатаҫ. Хăш пĕр ҫăнăхлă карас куҫĕсене хĕле хăварма сийелтен пыл тултарса питĕрсе лартаççĕ. Ҫапла хварнă ҫăнăх пăсăлмасҫ. Пăсăлса квакарнă ҫăнăхне вăсем çуркунне кларса прахаççĕ. Ку ҫăнăх тĕрлĕ сăнлă пулаҫ: сарă, хĕрлĕ, шурă, мĕнле ҫеҫекрен илни тăрăх. Анҫах пĕр хуртăн нихăҫан та тĕрлĕ ҫăнăх пулмасҫ, мĕншĕн тесен пĕр хурт пĕр йĕши ҫеҫекрен çеç пуҫтараҫ: хва çинҫен пуҫтарма тытăнсан карҫинкисене тултариҫенех хва ҫеҫекисем çинҫен пухаҫ, хва çинҫен сар ҫеҫек (одуванчик) çине каймасҫ хурт çапла пĕр ҫеҫек çинҫен тепĕр ҫеҫек çине çӳресе пĕр ҫеҫек ҫăнăхне хăй сисмесĕрех теприн çумне çыпăҫтарса хвараҫ. Çапла пĕр ҫеҫекпе тепĕр ҫеҫеке пустарнипе (сыхлантарнипе) курăкăн вăрри (тĕшши) пулаҫ [1]). Хуртсем çапла питĕ пысăк усă тăваççĕ. Акă мĕне астуса пĕлнĕ: вĕлле хурҫĕсем пулмасан тăхран пуҫĕн (клевер) вăрри виҫĕмĕш пайĕнҫен пĕр пайĕ те пулас çук [2]).

Çула хуртсем шывсăр пурнаймаççĕ, уна вăсем лаҫака сенҫен, йĕпе вырăнсенҫен, çулҫĕсем çинҫен илсе вĕллине пыл пек пĕсехине тултарса çĕклеççĕ. Хĕлле сӳрĕнкĕ çĕрте хĕҫ каҫаççĕ пулсан шывсăр тарăхмаççĕ, питетлемен пыл сывлăшран туртнă (сăхнă) шыв та çитеҫ.

Вĕллери çил вĕрекен çурăк шăтăксене питĕрме, хăйсем çӳрекен шăтăкĕсене пĕҫиклетме, лакăм—тĕкĕмсене тикĕслеме вăсен çилĕм пур, вырăсла «уза» теççĕ. Уна хуртсем йывăç кăҫăкисем çинҫен пуҫтарса карҫинкисем çине хурса çĕклеççĕ, ҫеҫек ҫăнăхĕ пек.

---

[1]) Пур ӳсекен йапаласен ҫеҫекисенҫен те аçи амине пусмасăр тĕшĕ пулмаст; ҫеҫекĕн ҫăнăхĕ вăл аçи—аçин вăрри.

[2]) Хуртсем ҫăнăхне илсе çӳресе ҫеҫексене пустарнипе çеç ҫавăн ҫухлĕ вăрă пулаҫ.

Хуртсен пуринҫен пысăк шухăши, кирлĕ ĕçĕ-çӳрисене пăхса ӳстермелли. Ку ĕçе çамрăк, тин тухнă, тула çӳреймен хуртсем ĕçлеççĕ: вăсем апат çитереççĕ, купаланса ларса ăшăтаççĕ.

Вĕлле хурҫĕсем хăйсем çуртне, вырăнне питех лайăх астăваççĕ, астунă пирки уйăртарма май тупнă. Çĕнĕ çурта—вĕллене хăвăрт иленеççĕ. Хуртсем хăйсене кирлĕ пĕр-пĕр тутлă йапала тупнă вырăна манма мар, хăйсемпе пĕрле йулташисене йертсе кайаççĕ.

Хуртсем пек хăйсен йышне йуратакан, тăшманĕсенҫен тарăхса сыхлакан урăх ҫунлă йапала сайра. Вăсем вĕлле шăтăкĕсем умĕнҫе татăлмасăр темиçен хурал тăраççĕ, кĕрекен пур хуртне шăршласа пăхаççĕ, Йуш хурта шăршинҫенех пелсе ытти тăшмансемпе пĕрех тăваççĕ, сăхаççĕ, хыпаççĕ. Пыл тултарса, йĕ ҫеҫек çăнăх çĕклесе килекен йут хрртсене çеç йышнаççĕ, тата сăрăсем те йут вăллене кĕме пултараççĕ. Вĕллинҫен айакра пулсан хуртсем тивмеççĕ.

Вĕри вăхăтра хуртсем пылĕнҫи ытлашши шывне сыватма вĕллинҫи сывлăша улăштараççĕ (сивĕтеççĕ, уçăлтараççĕ). Пуçĕсене вĕлле шăтăкĕсем патнелле тăваççĕ те, çунатисене питĕ хăвăрт ҫĕтретеççĕ. Çапла вара вĕллери ăшă, нӳрлĕ сывлăш тухаҫ те, вырне таси, типпи кĕреҫ. Анҫах хуртсем çапла сĕрлесе ларнине хуртсем хĕпĕртенĕ ҫух, йĕ çиленнĕ ҫух çунатисене ҫĕтресе сĕрлени вырне хума йурамаҫ. Хуртсем мĕншĕн те пулсан хĕпĕртесен, çуркунне хĕллехи вырăнтан кăларсан, вăсем кутне сӳлелле çĕкleççĕ те, ҫăн кайри сыпăкне çеç айалалла йараççĕ, вара кайри сыпăк хуппи витĕр курăнса тăраҫ. Çиленсен пĕтĕм хырăмне тăсаççĕ те, (кайри сыпăкне айалалла усăнтармасăр), сăннине клараççĕ, сăнни вĕçĕнҫе ыратаракан шĕвĕ йапали пулаҫ (яд.) Куна вĕллине сасартăк уçсанах, йе кăшт тĕтĕм йарсанах курма пулаҫ.

Хуртсем вĕллерен вĕрипе тухса шăтăкĕ айне купаланса лараççĕ. Çавăн пек вăл тунката вĕллере пиҫ пулаҫ, мĕншĕн тесен тумпата вĕлле ăшĕ пĕҫикĕ, пылне хăвăрт тултараççĕ. Çапла вара ĕçлеме çук, вĕллинҫе вĕри, шăрăк пирки тухса пĕтĕм вĕллине çӳлтен айала çитиҫенех тир пек хупласа илеççĕ. Кĕрсен кăшт ирхи сулхăнпа кĕреççĕ те, ăшăтсанах тухаççĕ, Сăрăсем май уйăхĕн вари тĕлнелле пулаççĕ те, паçăр каланă пек, пыл вăхăҫĕ иртиҫен, август уйăхĕ тавраш ҫурнаççĕ. Хăш ҫухне сăрăсене

иртерех те, кайарах та хăваласа кăлараççĕ. Амĕшсĕр вĕллесенҫе сарăсăне тивмеççĕ. Сăрăсем çухаçа пыл çийеççĕ те; кăнтăрлапа выԓԓама тухса вĕçеççĕ. Пыла вăсем питĕ нумай çийеççĕ, Цесельскій сунă шутпа 2000 сăрă, 2 уйăхра 30 кĕрепенкĕ ҫыхаççĕ. Çавăнпа сăрăсене ытлашши нумай пулма ҫарас пулаҫ. Малалла хурт пурнăççĕ çинҫен тепĕр ҫухне калаçăпăр.

Вĕлле хурҫĕсен пурăнăçĕ çинҫеҥ.

II.

Вĕлле хурҫĕсен açипе ами мĕнле пулнине, мĕншĕн пĕр йеши çăмартаран сăрăсем, тепĕр йешинҫен ĕç-хурҫĕсемпе амĕшсем тухнине ку таранҫен лайăхăн пĕлмесĕр вĕреннĕ çынсем хаҫĕ те шухăшлаçсĕ. Ун çинҫен ĕлĕк шухăшланине халĕ те никам та ҫăн мар тесе кăтартайман Вăл акă мĕнле: хурт амĕш хăй шухăшланипе, хăй ирĕкĕпе икĕ тĕрлĕ çмарта хураҭ; пĕр тĕрли açи вăррипе—„оплодотворенныя“. тепĕр тĕрли açин вăррисĕр—„неоплодотворенныя“. Açи вăриллĕ çăмартаран ĕç-хурҫĕ, йе амĕш пулма пултараҭ, açи вăррисĕринҫен açи-сăрă тухаҭ. Açин вăррилĕ çăмартасене вĕтĕ куçлă (ĕç-хурт) карас çине тăваҭ (çăвăр сапаҭ), вăррисĕр çăмартисене сăрă карасĕ çине тăваҭ. Açин вăррилĕ—„оплодотворенныя“ тесе акă мĕншĕн калаççĕ: хурт амĕшне açи-сăрă пуссан (çыхланнă ҫух) амĕш ăшне açин вăрлăхĕ йулаҭ („жидкост“), вара амĕш çăмартине тунă ҫух çав açин вăрлăхĕпе йĕпетсе (пуçса) кăлараҭ. Сăрă тума çăмартине açин вăррипе йĕпетмесĕрех тăваҭ, çавăншĕн кăсене açин вăррисĕр „неоплодотворенныя“ теççĕ. Çавăнпа хурт амĕш сăрăпа çыхланас килнĕ вăхăтра, çуралсан çиҫҫĕмĕш, йе саккăрăмĕш кунĕнҫе, мĕнле те пулса açине пустарса йулаймасан, ĕç-хурҫĕ карасĕ çине те сăрă çăмарти кăна сапаҭ, уна сăрă амĕш теççĕ, вырăсла „трутовка“ теççĕ. Çӳре сапакан ахаҫ ĕç-хурҫĕсене те „трутовка“ теççĕ, мĕншĕн тесен вăсен çăмарти açин вăррисĕр пулаҭ (ĕç-хурҫĕсем açипе çыхланмаççĕ), вăсем сăрă çес тăвасçĕ. Ĕç-хурҫĕ çӳре сапни хăçан пулаҭ-ши вăл? Акă хăçан: вĕллере амĕшĕ çук пулсан, açин вăрăллă çăмарта йе çӳре те йулмасан. Ку йыша амĕш парсан вĕлереççĕ, мĕншĕн тесен çӳре сапакан ĕç-хуртне амĕш пекех иленеççĕ. Çаплах та хăйсем йышне сийенсер тесе шутламаççĕ, сăрă çӳреллĕ карас куçĕсенех ватса амĕш хуран тухса лартаççĕ,

анҫах унтан сăрă çеç пулаҫ. Трутовкалла йышăн вĕт пуçлă карасри çӳререн те сăрă çеç пулаҫ, çавăнпа вĕсем карас куçĕсене сыпса вăрăм, мăкăр, курпун тăваççĕ, вырăсла „горбатая“ теççĕ. Трутовкалла йышăн мăкăр-курпун çӳре çеç пулаҫ. Тата вăл йĕркипе пулмасҫ, пиҫетленĕ карас куçĕпе йунашарах пушши те пур, çмартали те пур (рис. 4). Трутовка пĕр карас куçнех темиçе çăмарта та тăваҫ, çмартисем тĕпĕнҫе тăмаççĕ, йе карас куçĕн айкисенҫе, йе тĕпĕнҫех выртаççĕ. Трутовкана ĕç-хурҫĕпе палласа уйрас çук. Ку йыша мĕнле тӳрлетмелине епĕ „Сийенлĕ хурт йышĕсене сыватасипе тӳрлетесси синҫен çырнă кĕнекере каланă ҫĕ. Амĕш çухалнă вĕллере аçин вăрăлли çăмарта, йе çӳре пулсан, ку çӳре амĕш хуранĕнҫе мар, ĕç-хурҫĕ карасĕнҫе пулсан та, хуртсем карас кусне ватса амĕш хуран тăваççĕ те, çӳрине урăх тĕрлĕ çитерсе амĕш кăлараçççĕ. Сăрă карасĕнҫе ĕç-хурҫĕ тухни нихçан та çук; ĕç-хурҫĕ карасне ват амеш сайра хутра сăрă çăмарти тăваҫ, ват курпун—мăкăр çӳре пулаҫ. Анҫах вăл сайра ĕç-хурҫĕ хушинҫе çеç пулаҫ, трутовкăн ун пек мар, йĕркипе пĕтĕмпех мăкăр çӳре пулаҫ. Вĕллере амĕш çухалсан, вĕтĕ куçлă карасра питĕрмен çуре те, йе çăмарти те йулмасан, урăх вĕллерен амĕш хуран, пиҫетлемен ĕç-хурҫĕ çӳреллĕ, çăмарталă карас лартайрас пулаҫ, вара трутовка пулмасҫ, амĕшех пулаҫ. Пиҫетленĕ çӳререн амĕш кăлараймаççĕ. Çакăн синҫен каланă ҫух епĕ акă мĕн астуса илтĕм. Пĕр крестьянинăн пĕртен пĕр тунката вĕллинҫе амĕш çухалнă. Унăн çӳреллĕ, йе çăмарталлă карас татки параймалла пулнă, йышĕ тӳрленĕҫĕ. Йалĕнҫе хурт тытакан çынсем темиçе пулнă, хăйсен хурҫĕсем пĕтесрен пĕри те çавна карас татки паман. Тепĕр кӳрĕш йалта пĕр хурт йĕркине, хурт пурнĕçне пĕлекен çын пулнă. Вара çак çынран кайса ыйтнă та, вăл панă. Çав çын уншĕн хай хурҫĕсене усал пулас çуккине те пĕлнĕ, кăмăлĕ те ырă пулнă, çынна сийен пулсан кирак хăçан та пулăшнă. Вăл, вĕлле хурҫĕ пек, хăйне çеç мар, ытти çынсене те усă тăвастĕн пулнă. Çавăн пек çынсем ытларах пулҫĕрҫĕ, вара халăх лайăхрах пурнĕҫĕ. Пайан мана пулăшсан, ыран епĕ те пулăшма ҫарăнса тăмăттăм.



Рис. 4. Мăкăр, курпун çӳре, айалта, сылтăм йенҫе сăрăлла амĕш хуран.

Хурт амĕш пуринҫен ытла май уйĕхĕпе июн уйăхĕнҫе çӳре нумай сапаҫ. Ку вăхăтра тавлăкра 2000 çăмартана çитереҫ; ытларах та тăваҫ. Вăл çӳрене йĕркипе сапса пыраҫ, сапнă вырăн тавра çаврăна—çаврăна вырăнне тек аслăлатса пыраҫ. Çӳре сапнă ҫух хурт амĕш малтан ларас куçне пăхаҫ, вара хырăмне хăй айнелле туртса илсе карас куçĕ ăшне кӳртеҫ те, карас куçĕ тĕпне тивертсе пĕр çăмартине варне лартса хăвараҫ. Çуркунне хурт амĕш çӳрене çӳле сапаҫ, çула рамкă варине, кĕр кунне айала, мĕншĕн тесен кĕркунне çӳлте пыл пулаҫ. Анҫах кирак хăçан та çӳре сапнă вырăн вĕлле шăтăкĕ патнелле пулаҫ. Хурт амĕш ватларахпа, пĕр тват—пилĕк çула кайсан çӳре сахал сапакан пулаҫ. Ун иек амĕшне улăштарас пулаҫ.

Хуртсем амĕшĕшĕн темĕн тĕрлĕ тăрăшса. уна хисеплесе ус. раççĕ. Амĕш карас çинҫе нимскерне пăхмасăр, астумасăр ҫупнине кам курман! Уна хурҫĕсем хыпаланса çеç çул парса тăраççĕ, унăн хыçĕнҫен çулă уçăлса çеç тăраҫ. Хурҫĕ пăрăнса ĕлкреймесен, амĕшĕ унăн урлах каçса кайаҫ. Амĕш кирак ăçта çӳренĕ ҫух хурҫĕсем хăйсенҫен аҫашласĕ, савса иртереççĕ, пур те апат парасшĕн ҫĕлхисене ун патнелле тăсса тăраççĕ.

Хурт амĕшĕн ĕç-хурҫĕсенĕн пекех сăнни пур, анҫах сăннипе вăл урăх амĕшне çеç тĕлҫ пулса вăрçнă ҫух сăхаҫ. Амĕш хăй мĕн ҫухлĕ хăравçă тата! Хăй ларакан карасне вĕллерен кăларсан мĕнле вара курăнман вырана пытанасшĕн тараҫ.

Кирак мĕнле çăмартаран та-вĕтĕ куçлă карасра пулсанта, виçĕ кунтан пĕҫикĕ, шап-шурă, ăман иек хурт (çӳре—çăвăр) пулаҫ. Уна çавăн ҫухнех вĕçекен хурҫĕсем сĕт майлă, шурă, хăйсем ăшăнҫе йамăтланă апат параççĕ. Вара хурҫĕ сĕт çинҫе ишсе выртнă пек курăнаҫ. Çак апата ĕç-хурҫĕ тухмалла çӳресене виçĕ кун çеç çитереççĕ, сăрă тухмаллисене пилĕк кун çитереççĕ, малалла пиҫетлесе лартиҫенех ахаҫ апат çитереççĕ, уна пылпа ҫеҫек çăнăхне хутăштарса тăвăççĕ. Амĕш тухмалла çӳрене пиҫетлесе лартиҫенех йамăтланă ырă апат сĕт майли параççĕ. Çавăнпа амĕш тухмалла çӳре пысăкрах та, ырăрах ӳсеҫ. Ĕç-хурҫĕ тухмалла çӳрене сĕт пек апатпа çитернĕ вăхăтра амĕш хуранне лартса, малалла та çав апатпах çитерес пулсан, амĕш пулса тухаҫ. Хуртсем ĕç-хурҫĕ тухмалла çӳререн амĕш клармалла пулсан ҫăнах та çапла тăвайраççĕ, анҫах вăсем çӳрине амĕш хуранне куçармаççĕ, ахаҫ карас куçĕнҫен амĕш хуранĕ ăвайраççĕ (свищевый). Ĕç-хурҫĕ тухмаллипе амĕш тухмалла çӳ-

рене 5 кунтан, сăрă тухмаллине $6^1/_2$ кунтан çийелтен пиҫетлесе, питĕрсе лартаççĕ. Питĕрмеллине кивĕ (ватăлнă) ăвăса ҫеҫек çăнăхпе, çилĕмпе хутăштарса тăваççĕ. Ку вăхăтра çӳрисем карас куçне ӳссе тулаççĕ те, кăшт хутланарах выртаççĕ (рис. 5). Çӳресем хăйсене питĕрсе лартиҫен икĕ хут кипке прахаççĕ (вăсен çийелти тирĕ пуçĕнҫен пуçласа айала çитиҫен ҫулха пек тухса ӳкеҫ). Пиҫетлесе лартнă çӳре карас куçĕ тăрăх пуçне пиҫетĕ патнелле туса выртаҫ. Вăл унта йулашки хут варлаҫ те, пĕр çимесĕр ĕçлесе выртаҫ: çăварĕнҫен питĕ çинçе çип пекки кларса хăй тавра йăва, кипке пеки, çавăрма пуçлаҫ. Çавăрма малтан пиҫетĕ паҫĕнҫен пуçлаҫ, вара айалла анаҫ. Амĕш айала çавăрмасҫ. Çапла хăй тавра авраса [пĕтерсен çурăмне айалалла, пуçне пиҫетĕ патнелле туса выртаҫ те, тепĕр хут кипке прахса ăман пек шурă хуртран тепĕр майлă хурт пулаҫ, вырăсла уна „куколка“ теççĕ. Куколка пĕр сиккеленмесĕр выртнă вăхăтра вĕлле хурҫĕ паллисем пулма пуçлаççĕ, пуçĕ, хырăмĕ, урисем. Куколкан тата тепĕр йулашки хут кипки хăпăнса ӳкеҫ те, карас куçĕнҫе тиҥ вĕлле хурҫĕ йăшăлтатма пуçлаҫ. Ку вĕлле хурҫĕ малтан шурă; вра, пуçĕ хуралаҫ, хăй тĕттĕмленеҫ, тӳрленкелеҫ те, пиҫетне хĕррисенҫсн хышласа шăтарса тиҥ çутта тухаҫ. Çапла карас куçĕ пушансанах ытти хурҫĕсем йулнă кипкисене, тирĕсене тасатаççĕ, анҫах хăй тавра авраса тунă кипки—йăви унтах йулаҫ. Çакă йулакан кипкисемпе карас куçĕ хуралса, вĕтелсе кайаҫ. Кивĕ караспа хуртсем те вĕтелеççĕ. Еç-хурҫĕ çăмартаран вĕçекен хурт пулса тухиҫен 21 кун иртеҫ, сăрă 24 кун, амĕш 16 кун. Амĕш пуринҫен маларах ӳссе ситеҫ, сăрă пуринҫен кайарах.



Рис. 5. Çӳре.

Амĕш çуралса ӳснин вăхăтне пĕлсен, малтанхи çура (уйăракан хурт) малтанхи амĕш хуранне питĕрсе лартсаннах тухнине пĕлсен, иккĕмĕш çура—амĕш хураннĕнҫен тухсан уйăрăлса тухасса пĕлсен, хурт хăçан уйăрласса малтанах пĕлсе тăма пулаҫ: амĕш хураннĕнҫе çăмарта пулсан, уйăрласса 5—8 кунтан кĕтес пулаҫ, пĕр кунхи ăман пек шурă хурт пулсан—тăватă кунтан, пилĕк кунхи пулсан—тепĕр купах уйăрласса кĕҫ. Вĕллене сивĕтсен çӳре ӳссе хурт пулса тухасси пĕр куна, йе ытларах та тăсăлма пултарат.

Хурт амĕш тултан сăрăпа çыхланса унăн ӳтне татса кĕрсен, виççĕмĕш кунĕнче çăмарта тума пуçлаҫ.

Ĕнтĕ ырă сийенсĕр хурт йышĕн çулталăк хушшинчи пурнăçне кĕскен пăхса тухрăмăр.

Феврал уйăхĕнчех сывлăш çăмăланса çуркунне шăрши кĕреҫ. Хуртсем те çавна сисеççĕ. Çавăнпа хурт амĕш февралăн уйăхĕнчех, хăш ҫухне январь уйăхĕнчен çӳре сапма тытăнаҫ. Март уйăхĕ пĕтнĕ вăхăтра, апрĕл пуçланнă çĕре, çӳре темиçе карас çинче пулаҫ. Вĕллере çӳре декабр, йĕ ноябр уйăхĕнче те пулма пултараҫ, анҫах вăл сийенсĕр хĕҫ каçнипе мар.

Акă йур кайрĕ. Хĕвел çӳле хăпаракан пулнă, кăларса лартнă, йĕ тултах хĕҫ каçнă вĕллесене хытă хĕртеҫ, кăнтăрла сывлăш та пĕр 10 градус ăшă тытаҫ. Ырă хĕҫ каçнă вĕллесенҫен хурҫĕсем тухса вĕçме пуçланă. Хĕпĕртесе сĕрлесе вĕлле тĕлĕнче вĕçсе çаврăнаççĕ те, хĕҫ каçа пуçтарăннă вăрланҫăкне кларса хырăмĕсене пушатаççĕ. Вăйсăрланса йулнă вĕллесен çеç хурҫĕсем курăнмаççĕ. Пĕр-икĕ кун иртсен ăшă вăсене те илĕртсе кăлараҫ.

Хуртсем хăйсем вĕçсе тасалсан вĕллине тасатма тытăнаççĕ: вилнĕ хурҫĕсене кларса ывтаççĕ, пыл тĕпренҫĕкĕсене, пăсăлнă ҫеҫек çăнăхне, варланнă, квакарнă, катăлса укнĕ карас таткисене шалт тасатаççĕ. Вĕçсе тасалса пĕтнĕ пĕтменех пĕççисем çинче ҫеҫек сăнăх йăтма пуçлаççĕ. Анҫах ку вăхăтра тулта пыл çукки хуплаҫ, çавăнпа вĕллере хĕрĕнчи рамкăсенче йулнă пылсем пит хăвăрт кимĕлеççĕ. Сапнă çӳре пĕр майах хушăнса пыраҫ. Çуркунне хурҫĕсем те пиҫ нумай пĕтеççĕ, сивĕ çиҫ те пĕтереҫ, сивĕ, йурлă çĕр çине ларсан та хытса кайаççĕ. Анҫах ку пĕтекенни вырăнне çуралаканни тата ытларах пулса, йышĕ куллен кун хушăнаҫ. Амĕшĕ те ĕрҫес шухăшипе, йышĕ хушăннă майпа сăрă çӳре сапма пуçлаҫ. Тунката вĕллере хурҫĕсем карас айăнче çакăнса çĕнĕ карас тăсма тытăнаççĕ. Вĕллинче тăвăр, пăҫă пирки уйăрлас шухăш тытаççĕ те, карасĕсем айкисенĕ, аҫала амĕш хуранĕсем туса лартаççĕ, унта вара амĕшĕ пĕрер çăмарта хураҫ. Малтанхи хуранне çăмарта хуни сакăр кун иртсен, уна пиҫетлесе лартсан, çанталăк ҫармасан, кăнтăрлапа пĕр ушкăн ватă хурҫĕсем ватă амĕшĕпе, сăрисене те йертсе уйăрăлса тухаççĕ. Уйăрăлнă ҫух хуртсем вĕллерен сĕрлесе тăпăлса тухаççĕ те, вĕлли тĕлĕнче, пĕтĕм пахҫинче çаврăна—çаврăна вĕçеççĕ, вара йывăç çине, йĕ пĕр-пĕр йапала çине сăраççĕ. Уйăрланан хуртăн

сассине вĕреннĕ хулха сĕрленине илтсенех пĕлеҫ. Хурт уйăрăлни хурт пурнăҫĕнҫе ҫăн илемлĕ, ҫăн савăнăҫлă вăхăт; ку хурҫĕсемшĕн ҫеҫ мар, хуҫишĕн те пысăк уйав (праздник). Уйăрăлнă хурта пухса илмесен, вăл лăпланса нумайах та лармаст, тапранса, купаланса, сĕрлесе вĕҫсе кайаҫ. Вара айака пĕр-пĕр ҫĕре вăрмана мĕне хăйсемех тупса йамăтланă вырăна вырнаçаҫ (вăсен вырăн шыракан хурҫĕсем малтанах тупса йамăтлаççĕ). Крестьянсем çавăн пек тарса килнĕ хурт çӳрисене лайăх пĕлеççĕ, нумайĕшĕ вĕсенҫен цуçласа пысăк хурт пахҫи тăваççĕ.

Акă уйăрса кăларнă вĕлле лăпланса лараҫ, каҫсерен хурҫĕсем те шăтĕкĕ умĕнҫе купаланса лармаççĕ. Анҫах ку нумайа пымĕ, пĕр пилĕк кунтан çамрăк хуртсем çуралса каллех катăлнине тултараççĕ. Хай вĕлле каллех кĕрлеме тытăнаҫ. Хăш ҫухне вăйлăланипе, уйăрни сакăр кун иртсен, хуранĕнҫе йулнă амĕшĕ тухсан, иккĕмĕш хут, виççĕмĕш хут та уйраҫ. Ку тепĕр уйăрни—„поройка“ кирак хăсан та çамрăк амĕшĕпе тухаҫ, вăсем хăш ҫухне иккĕ-виççĕ те пĕрле тухаççĕ. Ку вĕлле тепĕр (иккĕмĕш-виççĕмĕш) уйрасшĕн мар пулсан, малтан тухнă амĕш хуранĕсенҫе лараканнисене пĕтерме тытнаҫ, тухманисемпе вăрçма-çапăçма. Çапла хăшĕ те хăшĕ çĕнтерсе ҫĕрĕ йулаҫ, çавă сăрăпа çыхланса çӳре сапма пуçлаҫ. Хăш ҫухне пĕр амĕш тепринҫен пытанса йулаҫ те, иккĕш тĕл пулса пĕри пĕрне вĕлериҫен ҫилай вăхăт пĕр йăвара пурнаççĕ.

Уйăрăлса тухнă çура хыпаланса хăвăртрах йăва тума тытăнаҫ. Уйрăлнă çура карасне мĕн тĕрлĕ хăвăрт туса антарнине кам пĕлмесĕ! Пĕр ернерен кив вĕллипе çĕнĕ вĕллине те пĕлес çук, карасĕ шурри çеҫ уйăрăлнă çӳра иккенне пĕлтереҫ. Нумай ҫухне тата хуртсем уйăрăлма шалт хатĕрленеççĕ, амĕш хуранĕсем те тăваççĕ, пиҫетлесе те лартаççĕ, унҫен те пулмасĕ—сасартăк мĕн пур амĕш хуранне касса тăкăççĕ. Пĕтрĕ уйăрласси! Вăл вĕллинҫе пылĕ ситмесен те пулаҫ, усал çанталăкран та, йе сасартăк пыл пуçтармалли пулсан та.

Вĕллере пыл хушăнма пуçларĕ. Акă пыл вăхăҫĕ—„главный взяток“ ситрĕ. Ĕçрен таврăнакан йывăр (çĕклемлĕ) хуртсем вĕлли умне çăмăр пек тăкнаççĕ те, вăллине ҫупса кĕрсе кăйаççĕ. Тарăхса вĕллине сивĕтеççĕ—уçăлтараççĕ, вăллинҫен пыл шăрши кӳкреҫ. Çӳлти, çӳре тăринҫи караслă пуш вырăна пылпа шалт тултарнă, айкинҫи карасĕсенҫе те çӳлтен пуçласа айалалла куллен кун пыл

хушăнаҫ. Çӳле те айкисене те хăвăртрах пыл пушатма рамкăсем хушмасан, хуртсем ирĕксĕрсх ĕççĕр лармалла пулĕ.

Кĕркунне хурт йăвине салатса пăхсан пылĕ акă ăçта пулĕ (рис. 6): вăта çĕринҫи рамкăсенĕн варинҫе сапнă çӳре пулаҫ,



Рис. 6. Хĕҫ каçма типтерленĕ вĕлĕри пыл: а) çӳрекен шăтлĕ ĕлки, б) каӳри.

айкисенҫе-пыл; унтан мĕн ҫухлĕ хĕрнерех пынă, çавăн ҫухлĕ пылĕ ытларах пулĕ, ҫăн хĕрĕнҫи рамкăсене шалт пыл тултараççĕ.

Çуркунне урăх тĕрлĕ пулаҫ (рис. 7). Вăта çĕринҫи карассенҫе [1]) лылĕ йулсан та кайра çеç йулаҫ, хĕрĕнҫи рамкăсенĕн пылĕ ытларах пулаҫ.



Рис. 7. Çав вĕллери пылах çуркунне.

Акă вăхăт кĕркунне йĕнелле кайа пуçларĕ. Ĕç-хурҫĕсем сăрăсене карасĕсем çинҫен хвалама тытнаççĕ, выçă анратаççĕ, вĕçме тухнисене вĕллене те калле кӳртмеççĕ, вилнисене кларса

[1]) Даҫан вĕлли пулсан.

ывтаççĕ. Хуртсем çуркунехи пек ăшăра та çуркунехи пек вĕçмеççĕ. Пурнăçĕ лăпланӑĕ, йăвашланӑĕç. Хĕле кĕнипе пурнĕçĕ тата ытларах лăпланаҫ. Çывăрнă майлă, пылсăр карассем çинӗе, уйрăлса тухнă çӳре турат çинӗе çакăнса ларнă пекех, лараççĕ, анӗах вăсен хушшинӗе карасĕсем пур. (рис. 8). Вĕлле хурӑĕсем



Рис. 8. Вĕлле хурӑĕсем хĕӑ каçнă вăхăтра.

хĕӑ каçа шăнасем пек, йе ытти лепĕшсем пек вилнĕ пек пулса ӑĕрĕлмеççĕ, ахаӑ лăпланса çеç лараççă. Вăл ӑăнах çапли акă мĕнрен паллă: хĕлле хулхана вĕлле çумне тыгса итлесен хуртсем пĕр май сĕрлесе ларни илтĕнеҫ, пĕлекен çын çав сасинӗенех сийенсĕр йышне ӑухлаҫ. Вĕллине йерепен шаккасан, ыйăха кайнă хуртсем хăранă пек, сасартăк сĕрлесе йараççĕ те, йерипен лăпланса лараççĕ. Хуртсем пĕр май пĕр вырăнта та лармаççĕ, йерипен пыллă карасĕсем çенелле шуса карас куçĕсене уçаççĕ те, ăшă тытмалăх, хăйсем пурăнмалăх сийеççĕ. Хĕрĕнӗе ларакан хурӑĕсем хăйсен купи варне кĕреççĕ те, варинӗисене хĕрнелле клараççĕ. Ăшă луш вырăна саланса сайа кайасран (ахаӑ пĕтесрен) вăсем питĕ йерипен, палăрмасăр хусканаççĕ. Çапла лăпланса ларнипе çеç вăсем хăйсене кирлĕ таран 10—12° ăшă тытаççĕ. Хĕӑ каçакан хуртсем хăйсен тавра çак ăшша тытсан çеç шывсăр тарăхмаççĕ. Хурт купинӗе ăпши çак 12° ытларах пулсан, пиӗетлемен

пыл сывлăшри шыва (пăса) илес çук, вара хурӑĕсем шыв ĕçес килнипе ирĕксĕрех хускалма тытăнаççĕ; хускалнипе тăта ытларах ăшă пулаҫ, вара ӑĕкрене йерме пултаррççĕ. Хăçан ăшă хăйсене кирлинӗен ытларах пулаҫ? Хуртсем питĕ ăшă 8° ытларах çуртра хĕлӗ каçаççĕ пулсан, йе вĕллине пиҫ ӗуркенипе ытлаши ăшă йе шăтăкĕ пĕӗикипе сивĕтме, уçăлтарма çук пулсан. Хуртсене сивĕ ăшĕ ӗухлĕ сийен тумасҫ. Сивĕ пулсан вăсем хумханса ăшăтма пултараççĕ, ăшăна ним тума çук. Хуртсене хĕл каçма вĕллисене ытлашши ӗӳркемен пулсан; çуртĕнӗе сивĕпе ăшă 0° градуса йаxăн пулсан-ӗăн ырри. Вĕлли икĕ хут хăмаллă—„двухстĕнный“, йе пĕрех 1 дюймалла, 1 вершкаллă хăмаран тунă пулсан, çийеле, рамкисем çине айкисене арпа ӗишса тунă пĕр вершкаллă минтерсем лартсан çитет. Ырă хĕӗ каçнă ӗухне хуртсем малтан вĕлле шăтăкĕ йенӗен çӳлелле, вара кайалла, хĕррисенелле шума пуçлаççĕ. Каламасăрах пĕлмелле: пылĕ ырă, ӗеӗек пылĕ, пиҫетленни пултăр та, кирлĕ вырăнта пултар. Хурт купи шуса пынă ӗух пушă рамкă тĕл пулсан, пылĕ унăн хыçĕнӗе пулсан, пылсăр карас урлă каçаймасăр выçă вилме пултараççĕ. Вĕлле витĕр çил каймалла ан пултăр, шыв та ан кайтăр, вăсене хĕӗ каçнă ӗух хускатас пулмасҫ.

Килĕшӳллĕ вĕлле суйласси синтен.

III.

Пур çын та, арçын та, хĕр—арăм та, кăпитах, вĕлле лармалăх çĕрĕ пулсан, хурт усрама пултараҫ, анҫах пурин те усси пĕр пек пулмасҫ. Вĕлле хурҫĕсенҫен нумай усĕ илессипе сахал усă курасси тĕрлĕрен пулаҫ. Пуринҫен малтан вырăнтан килеҫ—таврари çĕр—шывран: пыл тăвакан курăк—йывăç (ӳсекен йăпаласем) мĕн ҫухлĕ ытларах, çавăн ҫухлĕ хуртсем пыл ытларах пуçтарса хуçине усă тăваççĕ. Пĕр çĕртех те вырăнĕ вырăнĕпе пыл ҫеҫеки ӳснĕ тăрăх хуртран усă илесси пăхма пĕлнинҫен пит килет. Хурт пурăнăçне пĕлекен, вăсене усрама, пăхса ăнтарма, кирлĕ ĕçĕсене вăхăтĕнҫе тума пĕлекен çын, пылне çĕмĕрсе илнинҫен пуçне урăх ним пĕлмен çынран, уссине те нумай ытларах тутараҫ. Унтан тата хуртран усă илесси хурҫĕсене мĕнле вĕллере усранинҫен килет. Çак вĕллисем çинҫен калаçас тетĕп ĕнтĕ халĕ, мĕншĕн тесен хурт усракансем килĕшӳллĕ вĕлле суйласси çинҫен тĕрлĕ калаççĕ.

Ĕлĕк-авал етем пыл тутине сиссесĕн хурт—йĕрки [1]) хаҫхи ухатă майлă пулнă: çын хурт пурăнакан хăвăл йывăç тупаҫ те, пуртăпа касса шăтараҫ те, пылне çĕмĕрсе илет—мĕн пур ĕçĕ çавă. Ҫĕрĕ йулнă хурҫĕсем йе урăх вырăн тупса вырнаçнă, йе çавăнтах йăвине тӳрлеткелесе пурăннă. Унтан вара çынна хурт йăвине хăй çапла çĕмĕрни килĕшмен, пыла вăл типтерлĕрех тыткалама пуçланă: йывăçне ватмасăр, йăвине çĕмĕрмесĕр, хурҫĕсене пĕтермесĕр пылне çеç кирлĕ таран илме пуçланă; тата хуртсене иленте-ресшĕн йывăççен тăрне хăвăл йывăççем çака-çака йанă. Хурта

---

[1]) Хурт-хăмăр йĕркки тесе епĕ „пчеловодство“ тенине калатăн. Перев.

çапла усранине вырăсла „бортевое пчеловодство“ теççĕ, вăл халĕ те хăш-хăш çĕрте пур. Унтан кайран çынсем хурӑ̆ĕсем куç умĕнӑ̆е мар пирки хурт пурăнакан хăвăл йывăççене хăйсен килĕсем-çурӑ̆ĕсем патнелле килсе лартма пуçланă. Хайхи çапла хурӑ̆ĕсене пахӑ̆инӑ̆ех усрама пуçласан, хурт пурнăçне те пырса çыхланма тытăннă: хурӑ̆ĕсен çиме çитеймесен апат параŭ, сиве шăнасран та хистеŭ, вĕллине çӳлтен те, айалтанта уçмаллисем (хуппи, „должеи“) тăваŭ, апат пама валашка пеккисем тăваŭ... Тата кайран пылне илнĕ ӑ̆ух асап-хĕнӑ̆ пирки çынсем вĕлле ăшне çӳле ансăр хăма таткисем—„линеечки“ хума тытăннă; хурӑ̆ĕсем карасĕсене çав хăмасем çумне çыпăçтарса антараççĕ те, хуçи карасĕсене çӳлтен касса çĕмĕрмесрех кăлараŭ; карасĕсене айкисенӑ̆ен те вĕлле çумĕнӑ̆ен касса çĕмĕрмелле ан пултăр тесе, çав линейкасенӑ̆енех рамкăсем тума тытăнаŭ. Çак рамкăллă вĕллесенӑ̆е хуртсене пăхса усрама нумай çăмăл - ансат.

Епĕ çакăнта çырнă вĕллесенӑ̆ен пуçне ыттисем пурĕ те хурт усрама йурамаççĕ тесе калас мар тетĕп. Çук, апла мар, мĕнпĕн тесен хуртсене мĕн пур рамкăллă вăллесенӑ̆е пуринӑ̆е те усрама пулаŭ, ахаӑ̆ рамкăсăр тунката вĕллере те усрама пулаŭ, анӑ̆ах усси пĕр пек пулмасŭ: хурт пахӑ̆инӑ̆ен ӑ̆ăн пысăк—нумай усă илес тесен хурӑ̆ĕсене ăспа пĕлсе усрамалла вĕллере, ӑ̆ăн ырă вĕллере усрасан çеç çав усса илме пулаŭ.

Ĕнтĕ пăхăпăр—вĕлле пур йенӑ̆ен те ырри-аванни мĕнле пулмалла вăл.

Пуринӑ̆ен малтан вĕлле кирек хăш вăхăтра та хăвăрт салатса пăхма ансат пултăр, ырă пултăр; салатнă ӑ̆ух пĕр карас куçĕ те ванмалла ан пултăр, пĕр тăмлам пылĕ те йухмалла ан пултăр, хурӑ̆ĕсем те ан çиленӑ̆ĕр. Акă сирĕн хурт амĕшне шыраса тупмалла пулаŭ, ун пек вăл ӑ̆ас-ӑ̆асах пулаŭ. Сасартăк есир вĕллене сăрăсем тулнине сисетĕр, умĕнӑ̆и карассенӑ̆е ĕç-хурӑ̆ĕ тухмалли çӳре сапни çук, çавăнпа амĕшĕ пуррипе çукки палла мар. Мĕнле пĕлес? Пĕлсе хăвăртрах пулăшас пулаŭ, вăхăтĕнӑ̆е пулăшмасан хурт йышĕ амĕшĕсĕр пĕтсе лараŭ. Тунката вĕлле пулсан карасĕсене ватса çĕмĕрмесĕр пĕлес çук, салатмалли рамкăллă вĕлле пулсан туххăм кăна пăхса пĕлме пулаŭ. Йе пĕрер вĕллере амĕшĕ çӳре наӑ̆ар сапаŭ, вăл ватăлнă пирки пулаŭ, çавăнпа уна илсе лайăхипе улăштармалла. Саланман тунката вĕллере мĕнле тумалла уна?

Йе тата çӳре сапнӑ карас татки кирлӗ пулаҫ, ун пек вӑл ҫас-ҫасах пулаҫ: акӑ сирӗн пӗрер вӗлле тӑлӑха йулаҫ—амӗш çухалаҫ, уйӑрнӑ вӗллере пулаҫ вӑл. Мӗн тӑвас? Тухман сапнӑ çӳре (çӳре сапнӑ карас татки) лартас пулаҫ. Саланман тунката вӗллерен мӗнле илӗр-ши çав карас таткине? Темӗн ҫухлӗ карас касса çӗмӗрсе тӑкас пулаҫ те, ун вырне хурҫӗсем çӗнӗ карас ӗçлемелле пулаҫ.

Акӑ пыл илес вӑхӑт çитеҫ. Ку саланман тунката вӗллене мӗн ҫухлӗ ӗç, мӗн ҫухлӗ асап, мӗн ҫухлӗ варланса пӗтес пулаҫ! Кам пӗлеҫ! кам ҫухлаҫ веллине мӗн ҫухлӗ пылӗ йулнине, хурҫӗсене хӗҫ каçмалӑх пуррине çуккине? Нимӗн те курӑнмасҫ. Вара çапла калаççӗ: пӗлтӗр те, ун ҫенхи çулсенҫе те çав таран хӑварнӑҫӗ, кӑçал та çаплах хӑварас теççӗ (айалти хуппинҫен çӳлелле, йе хӗресрен çӳлелле). Çулпа çул пӗр пек килмесҫ, хӑш çулхине хуртсем çу каça та хӑйсене хӗҫ каçмалӑх пыл пухаймаççӗ. Хуçи вӗллере мӗн ҫухлӗ пылне, хурҫӗсене хӗллепе çуркунне çимелӗх пыл пуррине çуккине пӗлмен пирки темӗн ҫухлӗ хурт пӗтеҫ! Çуркунне мӗншӗн хуртсем вӗллисенҫен тухса тараççӗ? Çавӑншӑн тараççӗ. Саланман пунката вӗллере мӗн ҫухлӗ пыл йулнине мӗнле пӗлмелле? Саланакан рамкӑллӑ вӗллере мӗн ҫухлӗ пылне пӗр кӗрепенкӗ йумӑшмасӑр пӗлме пулаҫ. Хуртсем валли пыл сахал хӑварни хӑрушӑ пулсан, ытлаши нумай хӑварни те çавӑн пекех усӑллӑ мар, мӗншӗн тесен хуртсем пыллӑ карассем çинҫе ларса ӑшнаймасӑр сивӗпе пӗтеççӗ. Рамкӑллӑ вӗллесенҫе хурҫӗсене мӗн ҫухлӗ пыл кирлӗ, лӑп çавӑн ҫухлӗ хӑварма пулаҫ, вӑсене 20-рен 30 кӗрепенке çитиҫен кирлӗ.

Рамкӑллӑ вӗллесем пулсан вӑйсӑр йышсене йышлӑлантарма урӑх йышлӑ вӗллесенҫен çуре сапса тултарнӑ карасем те илсе лартма пулаҫ. Пыл пуçтарнӑ вӑхӑтра карас туса вӑхӑта иртересрен йӑвине те пуш карас лартса аслӑлатма пулаҫ. Рамкӑллӑ вӗллере машина карасӗ лартса сӑрӑсем ытлашши тухасран та ҫарма пулаҫ, тунката вӗллере ун пек тума çук. Сӑрӑсем нимӗскер те ӗçлемеççӗ, вӑсем пыл çеç сийеççӗ: 2000 сӑрӑ 2 уйӑхра 1 пӑта йахӑн çийеҫ. Хуртсене ӑшӑрах тума йӑвине те пӗҫиклетме пулаҫ. Анаҫӗ пулмасан кирлӗ вӑхӑтра апат пама пулаҫ. Кӗве çиме пуçланине сисме пулаҫ; уна хӑйне те, унӑн хурҫӗсене те пӗтерме пулаҫ. Вӗллери çӳп-çапсене тасатса вӗллене пӗрмайах таса тытма пулаҫ. Тунката вӗлле ӑшӗ пӗҫиккӗ пирки пысӑк усӑ парас çук. Рамкӑллӑ вӗлле ун пек мар, кирак хӑçан та пыл тултарнӑ карассене илсе, вырне пуш карас

лартма пулаҫ, вара хурҫĕсем пушшех хастарланса пыл пуҫтараççĕ.

Вĕлле тени тата хуртсене уйăрăлма, вĕсене уйăртарма, уйăрăлнине ҫарма майлă пултăр. Мĕнле вĕллепе хурт пахҫине хăвăрт пысăклатма пулаҫ, ҫав вĕлле ырă. Хуртсем хăйсем тĕллĕн ҫеç уйăрласса кĕтсен хурт хушăнса пахҫи хăвăрт аслăханас ҫук, вăсене хамăр уйăрас пулаҫ. Тунката вĕллерен каллех хамăр уйăрса илме ҫук, уна рамкăллă вĕллепе ҫеç пулаҫ. Пĕр сыншĕн хуртне хушса пахҫине аслăлатмалла пулсан, ҫавăн пекех тепри хăй пахҫинҫе пĕр пуҫ та ӳстересшĕн мар. Акă мĕн пек пулĕ: епир виҫ ĕне хĕҫ каҫармалăх апат хатĕрлĕпĕр те, ҫав апатпах выҫлăн-тутăн пилĕк ĕне хĕҫ каҫарăпăр. Паллă—пилĕк выҫă ĕне виҫ тутă инесем ҫухлĕ усă параймеҫ. Хурт йĕрки те ҫавăн пекех: пĕр пĕр вырăнта пыл тăвакан курăк ҫеҫек 100 вĕллене тăрантса усă параҫ пулсан, ҫавăнта 200 вĕлле лартсан хуртсем хăйсене ҫителĕх те пыл пуҫтараймĕҫ. Ҫавăнпа ку вырăнта тытсан 100 вĕлле, йе кайарах тытас та, вăйлăрах тытас. Уйăрса кăларнă йыш, йе уйăрăлса тухнă ҫӳрисем вăйлă пулас ҫук. Уйăрласса рамкăллă вĕллесенҫе ҫеç ҫарма пулаҫ. Унта амĕш хуранăсене те касса илме пулаҫ, йăвине те аслăлатма пулаҫ, вара хуртсем уйрас шухăша пăрахаççĕ. Саланман тунката вĕлле ҫавăн ҫухлĕ ырă мар! Йе тыткалама, ĕçлеме мĕн ҫухлĕ хĕн-асап! Ҫавсене пурне те шухăшласан ку вĕлле ку таранҫен пăрахăҫа тухманшĕн тĕлĕнес пулаҫ, хăҫан пăрахăҫа тухса йаҫĕ ҫеç йулнине кĕтес пулаҫ. Саланман тунката вĕллере ĕçлеме ҫăнах та питĕ хĕҫ: вĕллине пăхнă ҫух шăтăкă умĕнҫе, хуртсен ҫулĕ синҫе тăрса вĕҫсе ҫӳреме канҫĕрлес пулат; карасне каснă ҫух хăрах аллипе касса, хăрахипе карасне тытас пулаҫ те, карасĕсем ванаççĕ, ҫĕмĕрлеççĕ, татăлса та ӳкеççĕ... Ку вĕллерин пылĕ те рамкăллă вĕллери пек ҫипер, аван сăнлă пулмасҫ. „Товаръ лицомъ продается“ теççĕ, ҫавăнпа рамкăри пылăн хакĕ те пысăкрах. Ахаҫ вĕллере ĕслекене (сыннине) нимĕн те те куҫа курăнмасҫ, рамкăллă вĕллере уҫнă кĕнеке пек пур те курăнса тăраҫ; куҫа курнакан йапалана пĕлме те, вĕренме те ҫăмăл.

Епир ку таранҫҫен мĕнле вĕлле сыншĕн авантарахи синҫен ҫеç калаҫрăмăр. Малалла хурҫĕсемшĕн хăйсемшĕн мĕнле вĕлле ырăрахи синҫен калаҫăпăр—хуртсемшĕн мĕн усал, мĕн аванни синҫен. Ахаҫ тунката вĕлле килĕшменни, йураманни синҫен пĕлтĕмĕр, ҫавăнпа малалла рамкăллă вĕллесем синҫен ҫеç калăпăр—вăсене пĕр пĕринпе танлаштарăпăр.

Рамкăллă вĕллесене питех нумай тĕрлĕ тăваççĕ. Хаҫĕ ку вăхăтра миҫе тĕрлĕ вĕллипе суса та кăларас çук, хурт йĕркине пĕлекен çынисенҫен те ытларах пулĕ. Çавăнпа вĕллесем çинҫен тĕппи йĕрипе пĕлни питех кирлĕ, вара хурт усрама пуçлакан çынсене çул кăтартăпăр та, хăйсем сăнаспĕн тĕрлĕ вĕллере усраса пăхмалла пулмĕ. Хурт усракансене те мĕнле вĕллере усрама тытăнмаллипе кăтартăпăр.

Вĕллен ҫăн кирли (главная часть)—рамки. Рамки тăрăх мĕн пур вĕллесене икĕ пайа уйăрма пулаҫ; пĕр йешши çӳлĕ—вăрăм рамкăллисем, тепĕр йешши лутра—кĕске рамкаллисем. Лутра рамкăллă вĕллесем çинҫен каласа епĕ Дадан вĕллипе асăнăп, çӳлĕ рамкăллисем вырне Берлеша вĕлли çинҫен калăп, мĕншĕн тесен ку вĕллесем пирĕн хушăра нумайĕшĕн пур. Хуртсемшĕн хăш вĕлле йыш хупăнма—вăйлăланма ҫармаҫ, çав ырăрах; тепĕр тĕрлĕ каласан-хăш вĕлере хурт амĕш вырăн çук пирки çăмарта тума нихăçанта ҫарăнмаҫ, пĕр маях çӳре сапма вырăн пур, çав вĕлле ырăрах. Хăш вĕлле йыш хушма ырăрахине ĕненеспен çӳлĕ рамкăллă вĕллене лутра рамкăлипе танлаштарăпăр.

Çуркунне çӳлĕ рамкăллă вĕллепе лутра рамкăллипе салатса пăхсан акă мĕн курăпăр: çӳллин варинҫи карасĕсем çинҫе çӳлте пĕр $1^1/_2$ вершка пыл пулаҫ, унтан айалалла пĕр 3 вершка сапнă çӳре пулаҫ. Лешĕн—лутра рамкăлин çӳлте $^1/_2$ вершка пыл пулаҫ те, айалалла пăр 3 вершка каллех сапнă çӳре пулаҫ. Тухман çӳре виҫ вершкаран ытла никăш вĕллере те пулмаҫ, мĕншĕн тесен хуртсем шăнтасран хăраса ăшă вăхăт çитиҫен айала анса çӳре кăлармаççĕ. Çакă икĕ вĕлли те 7-шар рамкăсемпе хĕҫ каçса çура тухнă пулсан, лутра рамкăллă вĕллере 33 пин карас куçĕ пулаҫ (кашни рамкинҫе 27 квадрат. вершка, пĕр вершкинҫе 160 карас куçĕ), унтан хăшĕ пушă, хăшĕ пушă мар-тухман çӳреллĕ. Амĕш тавлăкра 2500 çăмарта сапсан, ку вырăн уна 14 кун ĕçлеме çитеҫ. Унҫен—14 кунтан ăшă вăхăт çитеҫ те, амĕшĕ нимрен хăрамасăр çӳре сапма айалалла та анаҫ, хайхи вĕллене çĕнĕ рамкăсем те хушма пулаҫ. Тепĕр 7 кунтан çӳлти карас куçĕсем пушанаççĕ, амĕш çакăнтах çĕнĕрен сапма пуçлаҫ. Леш çӳлĕ рамкăллă вĕллен 7-шĕнҫе 13 пин карас куçĕ кăна пулаҫ, унтан та хăшĕ пушă мар, хăшĕ пушă. Вăл амĕшне çăмарта тума 5 куна кăна çитеҫ, унтан малалла амĕш карас пушанасса, йе ăшă вăхăта кĕтсе ахалех ларас пулаҫ Карасĕ халĕ 16 кунтан тин пушанмалла, мĕншĕн тесен хурт çăмартаран 21 тавлăкран тин тухаҫ.

Амĕшĕ ахаҫ ларсан йышĕ те хушнас çук. Çапла ĕнтĕ çӳлĕ рамкăллă вĕллере хурт амĕшĕн ĕçсĕр вăхăт пиҫ нумай пулаҫ. Амĕш пĕр май çӳре сапмасан йышĕ те хушăнмасҫ, йыш пулмасан пылĕ те пухăнмасҫ. Пĕлекен çынсем çавăнпа „вăйлă йыш çăлаҫ“ теççĕ, мĕнле те пулса вăйлă йышсем çеç тытма тăрăшаççĕ. Халĕ çуркунехи çинҫен каланă пекех çулахи çинҫен те калама пулаҫ. Çула амĕш мĕн пур рамкăсем çине çӳре сапаҫ. Малтан çӳре сапнă карас куçĕсем пушаниҫен, 21 кун иртиҫен. амĕшне пĕр си çӳре сапма 52 пиҫ карас куçĕ кирлĕ, тата апаҫĕ валли 35 пиҫ кирлĕ, пурĕ, 87 пин карас куçĕ. Вĕсем 9 Дадан рамки çинҫе пулаççĕ, вăл 9 вершка хушшинҫе пулаҫ. Çӳлĕ рамкăллă вĕллере те çавăн пекех ҫарăнмасăр çӳре сапас пулсан 15 рамкă кирлĕ, 15 рамкă 13 вершка вырăн йышăнаҫ. Çапла ĕнтĕ икĕ тĕрлĕ вĕллинҫе те пĕр пекех çăмарта хурас пулсан амĕшĕн лутра вĕллере 9 рамкă çинҫе çӳрес пулаҫ; çулĕ рамкăллă вĕллере 15 рамкă çине каçкаласа çӳрес пулаҫ. Хурт амĕш йăва варинҫен айакалла пиҫ (хĕпĕртесех) çӳремесҫ, 13—15-мĕш рамкăсем çине хăш ҫухне пырса та, пăхмасҫ. Кунтан пуçне тата хурта йышланма апаҫĕсем çула та, хĕлле те тухман çӳресем патнерехи аван, çуреллĕ караççем çинҫех пулсан тата ырăрах. Пăхăпăр—мĕнле рамкăра апат нумайтарах пулĕ. Лутра рамкăллă вĕллере пылĕ 2 вершка пулсан, çӳлĕ рамкăллинҫе çултен 3 вершка сарлакĕш пулсан та, малтанхинҫе $20^1/_2$ квадрат. вершка пулаҫ, лешинҫе 12 кв. вершка кăна пулаҫ. Апаҫĕ ал айĕнҫе пулсассăн хуртсем апат шыраса пĕр рамкă çинҫен теприн çине каçса çӳрес çук; çапла çӳренни хĕлле пит ырă мар, мĕншĕн тесен хĕлле хурт хăйсен купинҫен уйрăлса кайсанах шăнса лараҫ. Лутра рамкăра пыл ытларах терĕмĕр, çавăнпа вăсене вĕллере хĕҫ каçма та сахалрах хăваратăн Сахал рамкăпа йăви пĕҫикĕ (ансăр) пулаҫ, пеҫик йăва ăшăрах пулаҫ.

Çапла ĕнтĕ лутра рамкăллĕ вĕлле (Дадан вĕлли) хуртсене хĕҫ каçма ырăрах пулаҫ.

Малалла хуртсене хĕлле мĕнле вĕллере ăшă тытма ырăрахине пăхăпăр. Лутра рамкăллă вĕллере хуртсем ҫăн çӳлте, маҫи айĕнҫех лараççĕ. Леш çӳлĕ рамкăллă вĕллере кăшт айаларах лараççĕ. Ăшă сывлăш çӳлелле кайнине пур те пĕлеççĕ пулĕ. Çапла ĕнтĕ вăрăм рамкăллă вĕллере хуртсем ăшăтнă сывлăш хăйсенҫен çӳлелле пуш вырăна кайаҫ, леш лутра рамкăллă вĕллере ăшă сывлăш маҫа айăнҫе хурҫĕсем ларнă çĕртех пулаҫ. Дадан вĕлли хуртсене

хĕҫ каçма ырăрах. Хуртсем пыла кирак хăçан та малтан çӳле хума пуçласçĕ (вырнаçтараççĕ). Çӳлте пушă вырăн йулмасан тин ытти вырăна—айкисене, айала тултараççĕ. Хуртсем пыл пуçтарнă вăхăтра вĕллерен пыл илме ансат пултăр тесессĕн, амĕшне çӳре сапма канҫăрласран (ҫарасран), вĕллен тăрне *тепĕр хут* ларт-малла пултăр. Вĕлле икĕ хутлă пулсассăн, айалти хутне салат-масăр, тивмесĕр пылне илме пулаҫ. Ку айалти хуҫĕ хуртсене йыш хушмалли, хĕлле валли анат йăмăтламалли пулаҫ. Хуртсем çӳлти хутра лутра рамкăллă вĕлле пулсан çеç ĕçлеççĕ, çулĕ рамкăллă вĕллерен хуртсем çӳлти хута улăхмаççĕ. Дадан вĕлли салатса пăх-ма та ытти çӳлĕ рамкăллă вĕллесенҫен, Берленша вĕллинҫен, ырă-рах, мĕншĕн тесен Берленша вĕллин рамкисене айкинҫен кăлар-малла, Дадан вĕллин—çӳлтен. Берленша вĕллинҫен варинҫи рам-кине кăларса пăхас пулсан, айкинҫен пуçласа варне ситиҫен кă-ларса хускатас пулаҫ; Дадан вăллинҫен кирлĕ вăхăтра кирак хăш рамкине кларса пăхма пулаҫ. Дадан вĕлли рамкисем Левицкій вĕллин пек пĕрпĕрин çумне çăт сыпăçăнса тăмаççĕ, çăвăнпа та кăларкалама ырăрах. Дадан вĕллин урайне те тасатма авантарах, унăн тĕнĕ хăпăнаҫ, вĕллине малалла ӳпĕнтерейрес пулаҫ. Хăш-кан вĕлле тĕнĕ туртса кăлармалла вĕлле тĕнĕнҫен ырăрах, мĕншĕн тесен малтанхин пĕтĕм вĕлли тĕнĕ синҫе лараҫ те, хушăк-шăтăк-сем-йулмаççĕ, леш вĕллен ун пек мар. Çапла ĕнтĕ Дадан вĕлли хурҫĕсемшĕн те, хуçишĕн те авантарах: салатса пăхма та ырă, тасатма та, йыш хушма та, хĕҫ каçма та.

Дадан вĕлли ыттисенҫен пуринҫен те лайăхрахран, епĕ хурт пахҫинҫе çавна çеç тытма хушăттăм, мĕншĕн тесен хуртсене пĕр тĕрлĕ вĕллере усрани пире нумай çăмăлрах та, йӳнерехе ӳкеҫ. Рамкисем пурин те пĕр пек пулсан, вăсене пĕр вĕллерен теприне кӳртсе лартма пулаҫ.

Халĕ çакă Дадан вĕлли синҫен сырнине епĕ хам хурт пур-нăçне тĕрлĕ вĕллере усраса сăнаса пăхни тăрăх калатăп. Тата ытти шанăçлă сынсем сăнанă сăмахисем тăрăхта калатăп. Вăл сынсен хăйсен вĕллисем çук; харпăр хăй шухăшласа кларнă сын, вĕллин ыррине паллаймаҫ. Епĕ хамта вĕлле шухăшласа кăлар-ман, çавăнпа тӳрĕ калатăп. Йулашки хут калап—вĕлле хурҫĕсене Дадан вĕллинҫе усрăр.

Инв. № 8404

ОТКРЫТА ПОДПИСКА НА 1910 ГОДЪ.

ЖУРНАЛЪ КАЗАНСКАГО ОБЩЕСТВА ПЧЕЛОВОДСТВА

Иллюстрированный періодическій органъ,

Выходитъ 8 разъ въ годъ (январь—апрѣль, сентябрь—декабрь), **за исключеніемъ лѣтнихъ мѣсяцевъ,** въ размѣрѣ отъ $2\frac{1}{2}$ до 3 листовъ.

ПРОГРАММА ЖУРНАЛА: 1) Отъ редакціи. 2) Состояніе и развитіе пчеловодства въ Казанскомъ краѣ. 3) Оригинальныя статьи. 4) Изъ иностранной литературы. 5) Изъ дѣятельности Земствъ, Обществъ пчеловодства и т. п. 6) Изъ періодической литературы. 7) Изъ дѣятельности Казанскаго Общества Пчеловодства и его Отдѣловъ. 8) Хроника. 9) Библіографія. 10) Смѣсь. 11) Справочный отдѣлъ („Вопросы и отвѣты", „Спросъ и предложеніе"). 12) Объявленія.

ЦѢЛЬ ИЗДАНІЯ. Главное мѣсто въ „Журналѣ" предполагается удѣлять: 1) изученію и освѣщенію состоянія и развитія пчеловодства въ Казанскомъ краѣ; 2) иностранной литературѣ (не менѣе 8 страницъ въ каждомъ №-рѣ) и 3) обзору русской періодической литературы. Остальные отдѣлы будутъ выполняться по общему типу журналовъ.

Въ 1910 году въ «Журналѣ» будетъ напечатанъ цѣлый рядъ статей (около 100 страницъ) изъ иностранной литературы въ переводѣ Н. А. Соловьевой съ многочисленными рисунками. Кромѣ того, будутъ помѣщены оригинальныя статьи слѣдующихъ авторовъ: А. С. Буткевича, П. Д. Дмитріева, А. К. Кулясова, А. Ф. Кунаховича, В. П. Логинова, В. П. Мельникова, Н. А. Соловьевой, Н. М. Толмачева, А. Е. Хабачева, В. С. Якубовскаго и др.

ПОДПИСНАЯ ПЛАТА:

Съ пересылкою и доставкою за 1 годъ . . 1 р. Для г.г. членовъ Каз. Общ. Пчел. и его Отдѣловъ, упл. чл. взносъ за 1910 годъ . . **50 к.**

Отдѣльный № 15 к.

Спросъ и предложеніе для подписчиковъ безплатно 1 разъ, болѣе по 5 к. со строки.

Плата за объявленія. Позади текста: 1 страница—5 рублей, $\frac{1}{2}$ стр.—3 р., $\frac{1}{4}$ стр.—2 р., $\frac{1}{8}$ стр—1 р. За 2 раза уступка 10%, 4 раза—25%, 8 разъ—50%. Впереди текста—вдвое дороже.

Отдѣльныя приложенія вѣсомъ не болѣе 1 лота—8 руб. съ тысячи экз., за каждый лишній лотъ по 6 руб. съ тысячи.

На письменный отвѣтъ должна быть приложена 7 коп. марка.

Всѣмъ годовымъ подписчикамъ будетъ разослана **премія: портреты** бывшихъ Казанскихъ дѣятелей-пчеловодовъ: **А. М. Бутлерова, И. В. Любарскаго. А. П. Паленина и С. П. Болотникова,** напечатанные на мѣловой бумагѣ. Первыя главы статьи *Ванъ-Гая* „Цвѣты и пчелы", напечатанныя въ 3 послѣднихъ №№ „Журнала" за 1909 г., подписчики на 1910 г. получатъ въ видѣ отдѣльныхъ оттисковъ.

Адресъ Редакціи г. Казань, Б.-Лядская д. Логинова.

Редакторы: *Н. А. Соловьева. В. П. Логиновъ. А. Е. Хабачевъ.*

ВП-64-1509/7
202 6
Чув.
3-2300/I

ВЪ РЕДАКЦІИ

„ЖУРНАЛЪ КАЗАНСКАГО ОБЩЕСТВО ПЧЕЛОВОДСТВА".

ПРОДАЮТСЯ:

I. Изданія Казанскаго Общества Пчеловодства:

1) Портретъ **Г. П. Кандратьева.** Исполненъ на слоновой бумагѣ ц. 1 экз. 10 к. 50% чистой прибыли поступаетъ въ фондъ имени Кандратьева.

2) **Кунаховичъ А. Ф.** Воскотопка-воскопрессъ, описаніе прибора съ таблицею рисунковъ. ц. 7 к. Изд. 2-ое 1910 г.

3) **Мельниковъ В. И.** Пчелиное воровство ц. 5 к. Изд. 2-е 1910 г.

5) **Его-же.** Отчего слетаютъ рои ц. 5 к. Изд. 2-е 1910 г.

4) **Программа** экзаменаціонной коммиссіи на пчеловода-практика при Казанскомъ Обществѣ. ц. 3 к.

6) **Труды** Казанскаго Общ. Пчеловод. 1907 и 1908 г. ц. каждаго года – 50 к. 1905 и 1906 г.г. въ продажѣ не имѣются.

7) **Труды перваго Съѣзда пчеловодовъ Казанской губ.** Съ 37 рис. въ текстѣ, 4 порт. на отд. листѣ и табл. въ краскахъ. 1 руб. Изд. 1910 г.

8) **В. П. Лобановъ.** Гнилецъ у пчелъ и способы лѣченія. Премированная на конкурсѣ брошюра съ рисунками ц. 10 коп.

9) **Н. П. Ильинскій.** Уходъ за пчелами въ ульяхъ Кука и Рута. Съ 2 рис. ц. 7 коп., 1909 г.

Новыя переводныя сочиненія.

10) **Е. Л. Праттъ** Упрощенный выводъ матокъ, перев. Н. Соловьевой. Съ 17 рис. ц. 25 к. 1909 г.

11) **Гандъ.** Горизонтально-разрѣзной улей пер. Н. Соловьевой. Съ 15 рис. и 1 табл. въ краск. цѣна 50 коп. 1909 г.

---

12) **В. И. Логиновъ.** Что такое гнилецъ и какъ отъ него избавиться съ 9 рис. ц. 15 к. (съ рисунковъ имѣются въ Обществѣ діапозитивы, ц. по 35 к. каждый.)

13) **Передвижной Музей.** Брошюра съ описаніемъ его содержанія и 45 поѣздокъ. Изд. 2-е. 1909 г. ц. 2 к.

14) **В. И. Логиновъ.** Складываніе гнѣздъ на зимовку въ ульяхъ съ низко-широкой рамкой. Съ 12 рис. ц. 15 коп. (имѣется 12 діапозитивовъ ц. 35 к. каждый). Изд. 1909 г.

15) **«Журналъ** Каз. Об. Пчел». за 1909 г. Содержитъ болѣе 300 ст. текста, въ томъ числѣ около 80 стр. переводовъ съ иностр. Съ 44 рис. въ текстѣ и съ прилож. портрета Г. П. Кандратьева ц. 1 руб. (Остается незначит. колич. экз.)

17) **А. Хабачевъ.** Чтенія по пчеловодству на чувашскомъ яз., пер. С. Сергѣева.

В. I. О пользѣ пчеловодства, о жизни пчелъ и о выборѣ подходящаго улья, съ 8 р. ц. 15 коп.

18) В. II. О принадлежностяхъ пчеловодства, объ уходѣ за пчелами объ исправленіи неблагополучныхъ семей, съ 28 р. ц. 15 к.

19 и 20) **Его-же.** Чтенія по пчеловодству на татарск. яз. перев. муллы Уразова въ 2-хъ вып. ц. по 15 к. вып.

II. Всѣ русскія изданія по пчеловодству

(*прейсъ-курантъ высылается безплатно*).

Выписывающіе отъ Редакціи „Журнала" за пересылку не платятъ.

1-1453273